ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕн Коммунистсем партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Февраль
28
ШАМАТКУН
№ 41 (8950)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).

ВАРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ СТАХАНОВЛА УЙĂХЛАХ? А. Селенин, Р. Шакуров, И. Мешков. — Вăрманта ĕçлекенсене мĕн пăшăрхантарать? (1 стр.).

ПАРТИ ПУРНАÇĔ: И. Новиков.—Кадрсене суйласа илсе ĕçе вырнаçтарасси тата вĕсене воспитани парасси (2 стр.).

И. Мартынов.—Артель хуçаланăхĕ тĕрекленсе пырать (2 стр.).

Производствăри халиччен пĕлмен резервсене шырамалла, тупмалла, вĕсемпе усă курмалла (3 стр.).

Н. Шувалов.—Пĕр тикĕс, график тăрăх ĕçлесассишĕн (3 стр.).

В. Давиденко, Н. Шереметьев.—Технологи процесне тĕрĕс йĕркелемелле (3 стр.).

В. Кузин.—Перекатлăхшăн кĕрешеттĕр (3 стр.).

П. Платонов.—Производство планне кашни предприяти тăтăшах тултарса пытăр (3 стр.).

Америка интервенчĕсем тытăна илнĕ салтаксемпе тупă ашĕ вырăнне усă кураççĕ (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Совет шахматисчĕсен чаплă çĕнтерĕвĕ (4 стр.).

Ф. Кузьмин.—Ыйтусемпе ответсем (4 стр.).

Производствăри резервсемпе пĕтĕмпех усă курассишĕн

СССР халăх хуçалăхĕн аталанăвĕ хăйĕн ресурчĕсен шучĕпе, накоплени тумалли шалти çăлăвсен шучĕпе пулса пырать. Çавăнпа та пирĕн пирти перекатлăх режимне çирĕп тытса пырас ĕçе ялаках пысăк вырăна хунă тата халĕ те пысăк вырăна хурать. Перекатлăх режимĕ—хуçалăха социализмла ертсе пымалли мелет. Халĕ, пирĕн çĕршывра халăх хуçалăхĕ çĕнĕрен хăвăтлăн ӳсе пынă тата халăха кулĕн кирлĕ тавараси хакĕсене тăтăшах йĕнтесе пынă вăхăтра, перекатлăх режимĕ тата пысăкрах вырăнта тăратъ. Производство ресурчĕсемпе мĕн чухлĕ тулăнирех те вырăнăхрах усă курăпăр, хамăр хуçалăха ăпшăр мĕн чухлĕ перекатлăрех те тирпейлĕрех тытса пырăпăр, халăх хуçалăхне аталантарас ĕçре çавăн чухлĕ ытларах çитĕнӳсем тăвăпăр, совет ĕçынисен пурнăçĕна культура шайĕ çавăн чухлĕ ытларах хăнарса пырĕ.

Пирĕн халăх социализмла производствăна аталантарассине хăйĕн тăван та чысла тивĕçĕ тесе шутлать. Вăл çакна лайăх пĕлсе тăрать: социализмла производствăн тĕллевĕ вăл—уçлăм мар, çынна мĕн кирлине, унăн материальнăй тата культурăлăй ыйтăвĕсене тивĕçтересси пулать. ССР Союзĕнче промышленность, ялхуçалăхĕ, транспорт чи малта тăракан техникăна хĕçпăлаланнă. Хăвалтă машинăсемпе тата *станоксемпе* ăста *рабочисем* ĕçлеççĕ. Совет наукине техникăн пĕрмай аталанăçĕ. Çапла вара пирĕн патра ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукцин хăйне лараканăсене хакне йĕнтесе пыма питĕ лайăх условисемпе майсем туса хатĕрленĕ. Вĕсемпе усă курса, совет çынниех пилĕк çуллăх планăна срочнех тата иртнерсе тултарассишĕн, хамăр çĕршывра коммунизм обществи туса ситересассишĕн хăйсен вăйăсене тăлламасăр кĕрешеççĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем технологи процесне çĕнетсе лайăхлатаççĕ, ыйăр ĕçсене механизацилеме, шалти резервсене палăртма тăрăшаççĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшакан çĕнĕрен те çĕнĕ мелсем шухăшласа кăлараççĕ.

Паян «Коммунизм ялавĕ» хаçатра республикăри хăйпĕр предприятисен паха опычĕ çинчен калакан тата пирĕн промышленносра шалти резервсем пуманлăхне кăтартакан материалсем пичетленсе тухаççĕ. Есĕлех Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод 1952 çулхи производство планне иртерсе тултарнă, ĕç тухăçлăхне ӳстернĕ, планран иртерсе чылай тупăш тунă. Апла пулин те, ку заводăн çуллă курман резервсем сахал мар. Унăн цехсем çĕр тинĕс ĕçлемеççĕ, штурмовщинăна пĕтермен. Иртнĕ çул завод вичĕ уйăх хушшинче плана тултарайман, рабочисене ĕç хыççăн хăварса нумай ĕçлеттернĕ. Кĕскен каласан, завод çĕршыва миллионшар тенкĕлĕх продукци ытларах лама пултарнă.

Малта пыракан предприятире пысăк резервсем пур пуласан, паллах, юлса пыракан фабрикăсемпе заводсенче продукци нумайрах туса кăларма. ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшакан майсемпе условисем тата ытларах. Иртнĕ çулта вырăнти промышленноçăн асăннă пайĕсем вырăнти чĕрта-вартан продукци туса кăларассĕç. Ĕç вăйĕ çитенĕлĕ. Вĕсем юлса пыни хуçалăх руководителĕсем ĕçе механизацилеме, техникăна тата-сăмахран ĕçлеттерме, социализмлă ăмăртăва сарма тивĕçлĕ мерăсем ĕлкĕриманнипе çеç килет. Нумай райпромкомбинатсемпе промартельсенче ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕкрех, вунпилĕк станок хăвалăрах, сав вăхăтрах ялыкăр ĕçсене ал-вĕçĕн тăпаççĕ. Республикăра оборудование пĕр смена ĕçе ĕçлеттерекен предприятисем сахал мар.

Чăваш АССР-ăн вырăнти промышленность министерстви, Строительство материалĕсем тăнакан промышленность управленийĕ, Вырăнти топлипо промышленность управленийĕ хăйсене пăхăнса тăракан предприятисенче оперативлă ертсе пымаççĕ, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма пулăшмаççĕ, малта пыракан коллективсен, новаторсен опытне сармаççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕнче асăннă управленисемпе организацисен ĕçĕнчи ситменлĕхсене хыта критикленĕчĕ, анчах вĕсен руководителĕсем сесси кăтартăвĕсенчен тивĕçлĕ вывод туни палăрмасть.

Малта пыракан ĕç меслечĕсемпе усă курасси, шалти резервсене палăртасси — хăй тĕллĕн пулса пыракан ĕç мар. Пирĕн совет кăтартусем çырса пани çителĕксĕр. Юлса пыракан предприятисене руководительсем, инженерсемпе техниксем чылай вăхăта кайса пулăшма тивĕçлĕ.

Промышленность енĕпе ĕçлекен министерствăсемпе управленисен, трестсен предприятисенче стахановецсен опытне мĕнле сарнине, рационализаторсен сĕнĕвĕсене нăхса туса мĕнле пурнăçа кĕртнине, науканпа техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене мĕнле усă курнине тăтăшах та тимлĕн интересленмелле. Хăшĕпĕр хуçалăх руководителĕсем предприятисенче кивĕлле ертсе пыма, канлĕрех пурăнма пăхаççĕ, çĕнĕ пуçарусене вăхăтра кирласа сарма тăрăшмаççĕ. Государство интересĕсем руководительсен ответлăхне ӳстерсе, самокритикăна *аллăран килекен критикăна* сарма, хуçалăха куллен те конкретлăн ертсе пыма хушаççĕ.

Хуçалăх работникĕсен,—тенĕ партин XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пилĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕллĕше пана директивăсенче,—производствăри халиччен пĕлмен резервсене шырамалла, тупмалла, вĕсемпе усă курмалла, производствăн пур пек хăвăрăсене пĕтĕмĕшпех усă курмалла, производство меслечĕсене пĕрмай лайăхлатса пымалла, производствăн хăйне лараканăсене хăнăхтермелле, хуçалăх расчетне пурнăçа кĕртсе пымалла.

Пирĕн кадресен пурин те хăйсен техникăпа экономикăна пĕлĕвĕсене куллен ӳстерсе пымалла, партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисене тимлĕн вĕренмелле. И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенин кадресене коммунизм тумалли майсене яр-рçăн кăтартса парать, хуçалăха социализмла меслетне ертсе пыма вĕрентет.

1953 çулта социализмла промышленность умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăрăççĕ. Предприятисенчи партине профсоюз организацийĕсен, хуçалăх работникĕсен рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене плана ăнăçлă тултарма мобилизацилемелле, совет çынниселе государство дисциплининне çирĕп пурнăçласа пыма, ситменлĕхсене хирĕç хăюлăн кĕреше, Тăван çĕршыв интересĕсене чи малти вырăна хума воспитани памалла.

Рабочисен пĕрлехи пухăвĕсенче, производствăллă канашлусенче малта пыракансен опычĕпе меслетне сараси çинчен, шалти резервсемпе тата ресурссемпе лайăх усă курасси çинчен сӳтсе явни, критикăна самокритикăна вăйлатса пыни, —çакă вăл производствăна малалла аталантарма, продукци пахалăхне лайăхлатма, чĕртаварпа материалсене перекатлеме пулăшать.

Предприятисен резервсене палăртас, новаторсен мелĕсене сарас тĕллĕше стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тата районсемпе хуласенчи хаçатсем пысăк ĕç туса иртнерне тивĕçлĕ. Оборудовани, ĕç вăхăтĕнче усă курас, чĕртаварпа материалсене расходлас, рационализаторла сĕнӳсене пăхса туса пурнăçа кĕртес ыйтусемпе корреспондентсен рейчĕсене иртерни, рабочисен çырăвĕсене пичетлесе кăларни предприятисене тухăçлăх ӳстереме, тăкăсене чакарма пулăшать.

Производствăри шалти резервсене палăртса, вĕсемпе тулли усă курса, социализмлă ăмăртăва вăйлатас шырса, пирĕн совет халăхĕ, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынине, социализмлă хуçалăха малалла аталантарас тĕллĕше çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕ, пилĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срочнех тултарĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Навигаци пуçланнă

ТАХИА-ТАШ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер кунтан «Урал» теплоход Аму-Дарья тăрăх тăвалла иккĕмĕш рейса тухса кайнă. Вăл нумай тонна груз тиенĕ баржа илсе пырать. Темиçе кун каялах «Урал» теплоход Тахиа-Таш гидроузел причалĕсем патне Кара-Тау карьерĕсенчен кăларнă строительство материалĕсем илсе пынă. Çакăнпа Аму-Дарья çинче асăлă стройка районĕнче навигаци пуçланнă.

Кăçал водниксем Тахиа-Таш районĕнче пысăк ӳсĕм туса иртеммелле пулать. Март уйăхĕнче тĕп сооружени котлованне бетон хывма тытăнмалла. Тахиа-Таш теплоэлектростанцийĕ валли оборудовани килсе тăрать. Сĕршер пин тонна строительство материалĕсем турттарса килмелле. Кăçал Кара-Таура кăна 600 пин тонна ытла чул, хăйăрпа грави тата пытти материалсем кăларамалла пулать. Вĕсем бетон ĕçĕсем валли, çулсем тума, çуртсем лартма кирлĕ пулаççĕ. Сак трузсене пурне те Тахиа-Таша шыв тăрăх илсе цымалла.

Стройкăра хăвалтă флот туса хураççĕ. Кăçал «Средазгидрострой» вымпелĕне çакнашкал вуншар баржăсемпе буксир пăрахутĕсем çуремелле.

Терек-Кума каналне тунă çĕрте

ПЯТИГОРСК, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Терек-Кума каналне тунă çĕрте ĕç куллен вăйланса пырать. Строительство объекчĕсене «Южгипроводхозăн» Пятигорски филиалĕ хатĕрленĕ проекчесем тăрăх тăвасăç.

Филиалăн главнăй инженерĕ В. М. Домбровский ТАСС корреспондентне çапла пĕлтернĕ:

— Терекпа Кума хушшинчи канал тăршшĕ 152 километр пулать. Ана Каспи тинĕсĕн кăнтăр пайĕнчи айăлăмне шыв парса тăма тăвасăç. Малтанхи черетпе пушхир пек Ногай çеçенхирĕсене тата «Хура çĕр» тенĕ вырăна шыв парса тăма пуçласăç. Ку айăлăма икĕ миллион гектар çĕр шутланать. Çавăн пекех тырă акса тумалли 200 пин гектар çĕре шăварса тăмалла пулать. Халăхи вăхăтра пĕтĕм Сурçĕр Осети территорийĕ тăрăх пыракан ĕç Ставрополь чиккисем патне сывхарса çитет. Терек шывĕ çинче тĕп сооружени тăвакан районта рабочисен поселокĕ тата производство çурчĕсем лартма тытăнăç. Машинăсеме механизмсем килсе тăрассĕç. Канал хывмалли вырăн тăршшĕпех топографсемпе геологсем ĕçлеççĕ, Павлов тĕп нервсен ĕçĕсене тĕпчеве тунă ĕçсене кăтартакан пай пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ку вăл наука аталанăвĕпе хăйне уйрăм таиăхр пулса тăнă. Иттни нумай экспонатсем хушшинче Павлов туса иртнерĕ опытсен результатĕчĕсем, йытăсен условнăй рефлекс пултăр тесе ученăй усă курнă сасăлă раздражительсем палла вырăн йышăнса тăраççĕ. Материалсем Павлов клиникăра ĕçлесе тунă открытисем çинчен, вăл иртерни «юнкунсем» çинчен каласа парассĕç.

Музея кума пыракансем Совет власĕ И. П. Павловăн тăрăшни çинчен, Павлов физиологиле чăтăлăн творчествăллă аталанăвĕ çинчен, ăна практикăлă медицинăна кĕртсе пыни çинчен калакан пайри материалсемпе интереслене пăлăнаççĕ. Асăлă вырăс физиологĕн ĕçĕсене те кунта нумай тăвăтăл. И. П. Павлов мирпĕн кĕреппине, вăл Тăван çĕршывăн сулăмлă патриочĕ пулнине уйрăм пайра кăтартса панă.

Пулăмсенчен пĕринче И. П. Павлов кабинечĕ. Кунта пур япаласем те ученăй хăй пурăннă вăхăтра мĕнле пулнă, çавăн пекех. Календарь çинче 1936 çулхи февралĕн 18-мĕшне палла тунă. Çакă кун ученăй кунтă юлашки хут пулнă. Музейра çавăн пекех Павлов портречĕсемпе скульптурисене нумай пухса хунă, кунтах тĕрлĕ хисеп паллисем, медальсемпе дипломсем.

Султалăк хушшинче музее 10 пин çын ытла пырса курнă.

И. П. Павлов академик музейĕнче

ЛЕНИНГРАД, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Петроградски сторонари И. П. *Павлов академик ячĕпе тăракан урам* экспериментальнăй медицина институчĕн корпусĕсем патне илсе пырать. Пысăках мар икĕ хутлă сурт çине кунта Иван Петрович Павлов 45 çул хушши ĕçлени çинчен çырнă хăма çыпăçасса хунă. Халĕ ку çурта лабораторисем, выльăхсене сăнакан клиника, операцисем, опытсем тумалли пулĕмсем вырăнаçнă.

Çак çуртăн 8 пулĕмĕнче — И. П. Павлов академик музейĕ. Юлашки вăхăтра музее чылай асăлатнă, çĕнĕ экспозицисемпе пуянланă. Асăлă ученăй вилнĕренпе 17 çул тултарас умĕн музей татах хаклă ăшшин документсем туяннă. Вĕсем И. П. Павловăн университетра вĕреннĕ тапхăрти пурнăçне тата вăл медицина çар академийĕнче ĕçленĕ тапхăрти ĕçне çутатса панаççĕ.

Музейĕн пĕрремĕш пайĕ И. П. Павловăн ача чухнехи тата çамрăк чухнехи пурнăçĕпе паллаштарать. Кунта Павлов пурăнна чухнехи халăхи социализмлă Рязань хулине кăтартса панă. Ытти пайсем ученăйăн творчествăллă лабораторине паллаштараççĕ. Тĕрлĕ документсем, схемăсем тата ытти экспонатсем И. П. Павлов ĕçĕ çĕрленине тата ăнăçа апат исленине сăнаса тунă чаплă ĕçсене, çавăн пекех тата апат панă пек тусан организмза мĕн пулнине кăтартакан чаплă операци çинчен каласа параççĕ. Çакă вăл хăрăмлăх ĕçне нервсем мĕнле пĕрлеленине пирвайхи хут тĕплĕн тĕпчеве пăхма май панă.

Пирĕн Тăван çĕршывра Совет власĕ пулнăранпа вуншар çĕнĕ хула ӳссе ларчĕç, вĕсенчен пĕри—Караганда. Çĕр кăмрăкĕ калăпаракансем пурăнакан çак çĕнĕ хула Казахстанри çеçенхирте ӳссе ларнă.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Караганда хулинчи Ленин урамĕнчи пурăнмалла çĕнĕ çуртсем.

П. ФЕДОРОВ фотоукерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

РЕСПУБЛИКАРИ МТС-сенче ТРАКТОРСЕМ ЮСАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

Февралĕн 25-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

Пăхăнăвĕ вырăн	МТС-сем	Тракторсем юсанă
1.	Пĕрпеç	100
2.	Сĕнтĕр	90,7
3.	Пăрачкав	86,9
4.	Сĕмĕрле	82,9
5.	Комсомольски	80
6.	Кувакино	75
7.	Шăмăршă	70,5
8.	Элĕк	69,6
9.	Вăрнар	69,6
10.	Чкаловски	69
11.	Красноармейски	64,1
12.	Первомайски	63,6
13.	Сĕрпĕ	63,1
14.	Улатăр	62,5
15.	Шăхасан	62,5
16.	Ишлей	61,9
17.	Вăрмар	60,7
18.	Елчĕк	60,6
19.	Етĕрне	60,4
20.	Сурмайдан	59,5
21.	Сивва	58,8
22.	Шупашкар	57,4
23.	Октябрьски	55,3
24.	Тăвай	54,5
25.	Канаш	53,8
26.	Куславкка	52,0
27.	Калинино	50
28.	Сĕнтĕрвăрри	50
29.	Муркаш	50
30.	Чурачăк	44,6
31.	Советски	39,3
32.	Хĕрлĕ Чутай	32,1

Пысăк тупăш илчĕç

ВĂРНАР. Хрущев ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулхи тупăшран колхозниксене çуйăнсем тăрăх тырă, çĕрçăви. ĕне çĕвĕ, аш-какай, пыл, купăста, кишĕр тата укçа валеçпе панă. Артелĕн нумай енлĕ производствинче куллен тăрăшса ĕçленĕ колхозниксене колхозницăсем пысăк тупăш илчĕç. Сăмахран, Егор Арланов семйи кăçал 1.742 ĕçкунĕ тунă. Çав ĕçкунĕсем тăрăх вăл 2.160 килограмм тырă, 3.690 килограмм çăвăлми, 17 килограмм ĕне çĕвĕ, 103 килограмм аш-какай, 14 килограмм пыл, 1.030 тенкĕ укçа илчĕ.

Ним ытла ĕçкунĕ тунă семьесем колхоза татах пур. Василий Копиров колхозник семйи—1.291 ĕçкунĕ, Моисей Васильев семйи—1.065 ĕçкунĕ, Виссарион Зубов семйи—1.007 ĕçкунĕ тунă. Вĕсем пурте ĕçкунĕсем тăрăх продуктемпе укçа нумай илчĕç.

Хĕрлĕ ĕç вăхăтĕнче колхозра столовăй уçнă. Пĕрлешӳллĕ столовăй ĕçлени колхозниксене ĕçе вăхăтра тухма пулăшнă, мĕншĕн тесен килте апат пĕçерес вăхăт иртнерни кирлĕ пулман. Çакă колхозри пур ĕçсене те вăхăтра туса иртерме май пачĕ.

Тăрăшса ĕçлекен колхозниксем пысăк тупăш илчĕç. Ку вăл тата вăтăрах тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать.

И. СТЕПАНОВ.

Февралĕн 20-мĕшĕ

Вăрман хатĕрлемелли стахановла уйăхлăх

Мартăн 20-мĕшĕ

КЕРКУННЕПЕ ХЕЛЛЕХИ ВАХАТРА ВАРМАН ХАТЕРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧАВАШВАРМАН» ТРЕСТ ЕНЕПЕ 1953 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 25-мĕшĕ ТЕЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

Районсем	Касса хатĕрленĕ	Çул хĕрринче илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	44,9	55,9	50,9
Элĕк	47,5	42,5	30,6
Вăрнар	48,4	42,6	52,9
Пĕрпеç	43,9	22,0	29,1
Ишлей	—	—	58,3
Калинино	45,7	51,7	43,2
Канаш	54,8	29,7	37,6
Комсомольски	93,4	49,5	77,0
Куславкка	123,2	100	108,4
Красноармейски	39,5	10,2	31,8
Хĕрлĕ Чутай	56,4	20,7	—
Кувайкино	43,1	22,8	49,4
Сĕнтĕрвăрри	82,9	62,2	—
Муркаш	84,3	76,8	—
Октябрьски	83,2	72,6	54,5
Первомайски	77,2	41,5	49,3
Пăрачкав	64,2	69,3	20,2
Советски	41,9	71,6	18,5
Сĕнтĕр	—	29,8	—
Вăрмар	62,8	16,7	50,6
Сĕрпĕ	32,8	10,8	41,9
Шупашкар	136,6	123,8	122,6
Чкаловски	99,7	66,7	54,7
Чурачăк	62,0	39,2	85,9
Шăмăршă	64,3	18,1	69,3
Шăхасан	58,9	33,5	38,7
Сĕмĕрле	75,7	87,0	101,5
Етĕрне	—	19,1	38,6
Елчĕк	29,1	85,1	35,3
Тăвай	46,4	12,4	36,2

Вăрманта ĕçлекенсене мĕн пăшăрхантарать?

Первомайски вăрманпромхозăн тата Кивĕ Эйпеç вăрман пунчĕн руководителĕсем канала тăрăх, колхозниксем валли ĕçлеме те, пурăнма та лайăх майсем туса пана. Чăнниле вара кунта колхозниксен ыйтăвĕсене тивĕçтересси çине чунсăр пăхнине кăтартакан тĕслĕхсем нумай.

Чкаловски районĕнчи «Маяк» колхоз членĕсем 1952 çулхи декабрь уйăхĕнче касса хатĕрленĕ 197 фестметр йывăç Трофимов мастер халĕ те йышăнман. Асăннă мастер кунĕн-çĕрĕн ĕçĕр çӳрет. Çавăнпа унăн тунă ĕçе йышăнма та, свеленисем пама та вăхăт çук. Ситменнине тата вăл документсене сухатать. Асăннă колхоз членĕсем январĕн 29-мĕшĕнче 46 фестметр йывăç турттарса кăларнă. Çавăн çинчен вĕсене халĕ те квитанци çырса паман. Мастер колхозниксене улталас çул çине тăнă. «Герой» колхоз членĕсем çул хĕррине илсе тухнă 92 фестметр йывăçа тата турттарса кăларнă 47 фестметр йывăça Трофимов пытарса хăварма, урăх сĕре сутма хăтланнă. Анчах та ултавçăн ĕç тухмарĕ, унăн документĕсене тĕрĕслени ăна тăрă шыв çине кăларчĕ.

Трофимов пирки сăмах та калаймала: вăл ӳстермесĕр колхозниксен ĕçне йышăнмасть е йышăнсан та хут çырса памасть. Вăрманта ĕçлекенсем ун патне мĕнле те пулин ыйтупа пырсан: «тинĕ кашăк çăвара çурать», тет иртĕнсе кайнă мастер.

Фадеев мастер пирки те çавнах калаймалла. Вăл та ĕçĕрĕн пушанаймасть. Февралĕн 14—16-мĕшĕсенче вăл ĕçе тухмасăр ĕçкĕре çӳрерĕ.

Колхозниксенĕ ĕç укçи вăхăтра пани вĕсен пурнăçна йăла условийĕсене лайăхлатма чылай пулăшнă пулĕчĕ. Анчах апла тумаççĕ.

Вăрман пунктĕнче акт-расчетсене регистрацилемеççĕ, ăçта кирлĕ унта вырттарса çӳретеççĕ. Храмовпа Павлов бухгалтерсем учета йĕркелеме тăрăшмаççĕ. Вĕсем те ĕçке юратаççĕ. Павлов бухгалтер колхозниксен жалобисем çинче чунсăр пăхать.

Ĕçке ярăм чарусăр работниксем пирки вăрман пунчĕн начальникĕ В. Усанов юлташ лайăх пĕлет, анчах тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть. Вăл государство дисциплинине çирĕп тытса пыраймăш, хăйне пăхăнса тăракан работниксене контролесе тăрăшми пулнă.

Вăрманта куллен кирлĕ тавăрсем сутассине йĕркелемен. Магазинта краççăн, лампа, ут тăтăрĕсем тата ытти кирлĕ япаласем çук. Л. Козлова продавщица магазина хăйĕн кăмăлне кайăк чухне сĕç уçать, хăшпĕр тавăрсене вăртăн сутать.

Вăрман хатĕрлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕç çук. Калаçусем, докладсемпе лекцисем пулмаççĕ. Вăрман хатĕрлемелли плана срочнех тултарас тĕллĕше ăмăрту пур сĕрте те вăйланмалла, пăлăн ĕнерхинчен, ырăн паянхинчен лайăхрах ĕçлемелле. Первомайски вăрманпромхоз директорĕ А. Наумовпа Кивĕ Эйпеç вăрман пунчĕн начальникĕ В. Усанов юлташсен асăннă ситменлăхсене кăвăртрах пĕтермелле, колхозниксене валли тухăçлă ĕçлеме паха условисем туса памалла.

А. СЕЛЕНИН,
КПСС Чкаловски районĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ.
Р. ШАКУРОВ,
ВЛКСМ Чкаловски районăн секретарĕ.
И. МЕШКОВ,
«Авангард» хаçат редакторĕ.

Пĕрпеç вăрманпромхозĕн Дубравнăй вăрман участокĕнче лавçă Н. М. Сабанов юлташ. Вăл ĕç нормине куллен иртерме тултарать.

Г. ЗИНЬКОВ фотоукерчĕкĕ.

Тăван çĕршыва—йывăç

Первомайски районĕнчи «Пионер» колхоз членĕсем вăрман хатĕрлемелли плана тултарнăлăн уйăхăха хастарлăн хутшăнчĕç. Çак кунсенче вăрман хатĕрлеме 20 çын çуран, 14 лан кайрĕç. Уйăхăхăра колхозри комсомолсемпе çамрăксем те тăрăшса ĕçлеççĕ, Комсомол организацин секретарĕ И. Рейков юлтан сезон пуçланăранпах вăрманта ĕçлет.

Вăрманта ĕçлекенсем вăрман хатĕрлемелли плана мартăн 1-мĕшĕ тĕлне пур енĕпе те тултарма пуччĕç.

«Коммунар».

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Кадрсене суйласа илсе ĕçе вырнаçтарасси тата вĕсене воспитани парасси

Кадрсем суйласа илес тата вĕсене воспитани парас ĕçе Коммунистсен партийĕ пысăка хурса хаклать. Пирĕн аслă çулпуçăмăрсем В. И. Ленин тата И. В. Сталин кадрсене суйласа илесси тата ĕçе мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăрасси организациллĕ ĕçре чи кирлĕ пулать, тесе вĕрентеççĕ.

Кадрсем пăхса ÿстерес, вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе Канаш хулинчи парторганизаци сахал мар ĕç турĕ. Пирĕн хулари ертсе пыракан кадрсенчен нумайăшĕ хăйсене шанса панă ĕçе тÿрĕ кăмăлпа туса пыраççĕ, предприятисемпе организацисене ертсе пырас тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

«Дружба» промысла артельне чылай вăхăт ĕнтĕ коммунист А. Васильев юлташ ертсе пырать. Васильев юлташ, практикăллă ĕçре пысăк опыт пухнă май, артель коллективне умра тăракан задачăсене пурнăçлама пĕлсе мобилизацилет. Артель производство планне кашни уйăхра, кашни кварталта ирттерсе тултарать. Сăмахран, артель коллективĕ 1951 çулта производство планне 115 процент тултарнă пулсан, иртнĕ çулхи задание 160,3 процент пурнăçланă. Хальхи ÿсĕмсем тата та пысăкрах. Синицын юлташ ертсе пыракан «Швейник» промартель те шалти резервсене тĕрĕс те пĕлсе мобилизациленине пула ĕçре пысăк ÿсĕмсем турĕ. Предприяти руководителĕсем ĕçре пултарулăх кăтартни çинчен сахал мар тĕслĕхсем илсе кăтартма пулать.

Сталин юлташ кадрсене вăхăтра пысăкрах ĕçе куçарни, çамрăк кадрсене хăюллăн ÿстерсе пыни кирлĕ, тесе вĕрентет.

Иртнĕ çулта партипе совет, профсоюз тата хуçалăх ĕçĕсене ертсе пыма çĕнĕрен [illegible] сем хушшинче чылайăшĕ — çамрăксем. Сăмахран, вагонсем юсакан заводри токаре Таланов юлташа ВЛКСМ завкомĕн секретарĕ пулма уйăрса лартнă. Пултаруллă рабочи пулнăскер, Таланов юлташ комсомол организацийĕн ĕçне палăрмаллах лайăхлатса пырать. Комсомол хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма В. Романова юлташа уйăрса лартнă. Романова юлташ хулари комсомол организацине ертсе пырас ĕçре хăйĕн пултарулăхĕпе пуçарулăхне лайăх палăртрĕ. Вагонсем юсакан заводра чылай çамрăк специалистсене пысăкрах вырăна уйăрса лартнă. Парти членне Орлов юлташа смена начальникĕнчен цех начальникĕн заместителĕ пулма уйăрнă. Парти членĕн кандидатне Андреев инженера, мастер пулса ĕçленĕскерне, цех начальникĕн заместителĕ пулма, çамрăк техника Евсеев юлташа цех мастерĕнчен цех начальникĕн заместительне лартнă. Асăннă юлташсем çĕнĕ ĕçе лайăх вĕренсе пыраççĕ. Хула комитечĕн çамрăк кадрсене воспитани парас тĕлĕшпе малашне тата та ытларах ĕçлемелле пулать.

КПСС хула комитечĕ кадрсене воспитани парас ыйтусене бюро ларăвĕсенче сÿтсе явать, çамрăк кадрсемпе семинарсемпе канашлусем ирттерет, вĕсемпе хула комитечĕн секретарĕсем уйрăммăн тĕл пулса калаçаççĕ. Комитета чĕннĕ работниксемпе тĕрлĕ ыйтусене сÿтсе яватпăр. Кунсăр пуçне, КПСС хула комитечĕн работникĕсем предприятисемпе учрежденисенче тăтăшах пулаççĕ, кадрсене практикăллă пулăшу параççĕ.

Семинарсемпе канашлусем тăтăшах ирттерни парти кадрĕсене воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Иртнĕ çулта парторганизаци секретарĕсемпе 9 семинар, 14 канашлу ирттернĕ. Профсоюз работникĕсемпе те семинарсем тăтăшах ирттеретпĕр. Вĕсемпе ятарласа 5 кунлăх семинар ирттертĕмĕр. Профсоюз работникĕсем семинарсене производствăран уйрăлмасăр çÿрерĕç.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе ытти работниксен отчечĕсене парти комитечĕн пайĕсенче итлени ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Иртнĕ çулта хула комитечĕн партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсен пайĕнче 42 парторганизаци секретарĕн отчетне итленĕ.

Хула комитечĕн промышленноçпа транспорт пайĕ те чылай ĕçсем тунă. Сăмахран, КПСС хула комитечĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен сыхăну кантурĕнчи, çăкăр заводĕнчи пуçламăш парторганизацисен отчечĕсене сÿтсе явнă. Кунта производство ыйтăвĕсем тăрăх канашлусем ирттернĕ, парторганизаци секретарĕсене пĕрерĕн чĕнсе каласнă. Пропагандăпа агитаци пайĕ те парторганизаци секретарĕсене час-часах калаçăва чĕнет.

Парти органĕсен кадрсем суйласа илсе вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе ялавах ответлăха туйса ĕçлес пулать. Унсăрăн йăнăшсем пулма пултараççĕ. Анчах та кадрсен малашнехи политикăллă тата теориллĕ ÿсĕмĕшĕн тăрăшмасан, ĕç харама кайма пултарать. Çакна шута илсе, партин хула комитечĕ кадрсене вĕрентес тĕлĕшпе нумай вăй хурса ĕçлерĕ. Хальхи вăхăтра ертсе пыракан мĕнпур кадрсене политикăллă вĕренĕве хутшăнтарнă.

Хула комитечĕ пропагандистсен кадрĕсене суйласа илес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕ. 92 пропагандистран 39 çын — аслă пĕлÿ илнĕскерсем, ыттисем вăтам шкултан вĕренсе тухнă е унтан та ытларах вĕреннĕ. КПСС хула комитечĕ сахалтарах опытлă пропагандистсене тăтăшах пулăшать, вĕсем валли ятарласа семинарсем ирттерет. Хула комитечĕн работникĕсем занятисенче час-часах пулаççĕ.

Вăтам тата аслă пĕлÿ илеймен работниксем каçхи вăтам шкулта, чылайăшĕ аслă шкулсенче заочно вĕренеççĕ.

Кадрсен пахалăхне лайăхлатса пыратпăр пулин те, работниксене суйласа илсе ĕçе лартас тата воспитани парас тĕлĕшпе пирĕн пысăк çитменлĕхсем те пур-ха.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ кадрсемпе ĕçлессинче мĕнле çитменлĕхсем пуррине лайăх кăтартса пачĕ.

«Тĕп çитменлĕх, — терĕ Г. М. Маленков юлташ хăйĕн докладĕнче, — çакăнта пулать: хăшпĕр руководительсем кадрсене вĕсен политика тĕлĕшĕнчи тата ĕçри пахалăхĕсене кура мар, çемьеллĕ, туслă пулни тăрăх, пĕр вырăнтисем пулнă тăрăх суйласа илеççĕ. Час-часах тÿрĕ кăмăллă, ĕçе лайăх пĕлекен, анчах ыйтусене çивĕч лартакан, çитменлĕхсене тÿсме пултарайман, çавăнпа та руководствăна канăç паман работниксене, тĕрлĕ сăлтавсем тупса, ĕçрен кăларса яраççĕ, вĕсем вырăнне пахалăхĕ паллă мар е ĕçе пачах юрăхсăр, анчах хăшпĕр руководительсене юракан тата вĕсене килĕшекен çынсене ĕçе илеççĕ. Кадрсене суйласа илес тата аслăрах ĕçе лартас тĕлĕшпе парти çулйĕрне çавăн пек пăснă пирки хăшпĕр организацисенче пĕр-пĕрне хÿтĕленипе çыхăнса пурăнакан çынсен, хăйсен ушкăнĕн интересĕсене партипе государство интересĕсенчен мала хуракан çынсен çемйи пулса тăрать. Тĕлĕнмелли çук ĕнтĕ, ун пек лару-тăру пăсăлса, çĕрсе каясси патне илсе пырать».

Çак сăмахсем шăп та шай пирĕн хулари хăшпĕр предприятисене тÿрремĕн пырса тивеççĕ. Çав «пĕр-пĕрне хÿтĕленипе çыхăнса пурăнакан çынсен» ушкăнĕ шăп та шай Канатри маслопром кантурĕнче пулнă та. Критикăпа самокритика кирлĕ вырăнта тăман пирки тата [illegible] ти руководительсем (директорĕ Швец) государствăна сиен кÿрес çул çине тăнă. 1951—1952 çулсем хушшинче маслопромран 1.713 килограмм çу салатса пĕтернĕ. Вăл шутран база директорĕ Швец хăй 60 килограмм, бухгалтер Синица 47 килограмм, парторганизаци секретарĕ пулса ĕçленĕ Никоноров 22 килограмм илнĕ. Унсăр пуçне, маслопромри уйрăм работниксем ытти тĕрлĕ пурлăха хăйсем сумне чиксе пурăннă, спекуляци тунă. Сăмахран, база директорĕ Швец хăй 100 килограмм витмелли тимĕр, 450 килограмм тырă илнĕ.

Мĕншĕн-ха çакăн пек йĕркесĕрлĕхсем пулса пынă? Мĕншĕн тесен кунта пуçламăш парторганизаци хăйĕн рольне йышăнайман, критикăпа самокритика кирлĕ вырăнта тăман. Çак ыйтăва парти пухăвĕнче сÿтсе явнă чухне акă мĕн курăнчĕ: уйрăм коммунистсем Швеца хÿтĕлеме пăхрĕç, партиллĕ принциплăхран пăрăнчĕç. Калас пулать, пĕр енчен КПСС хула комитечĕ кунти парторганизаци ĕçĕпе сахалтарах интересленнĕ. Тепĕр енчен, маслопромра çавăн пек киревсĕр ĕçсем пулни Маслопром тресчĕ кирлĕ пек ĕçлесе пыманнинчен килсе тухрĕ. Трест работникĕсем Канашри маслопромри çитменлĕхсене аван пĕлсе тăнă, çав киревсĕрлĕхсене ревизи тусан та палăртнă. Анчах государство интересĕсене хирĕçле пыракансене вăхăтра чарса лартма пулăшаканни никам та тупăнман. «Алла алă çăвать», тенĕ пек пулса пынă кунта.

Пĕр-пĕрне хÿтĕленипе çыхăнса пурăнакансен, хăйсен интересĕсене партипе государство интересĕсенчен мала хуракансен тепĕр ушкăнĕ строительство кантурĕнче пулнă. Çак кантурта главнăй инженерăн арăмĕпе снабжени пайĕн начальникĕн арăмĕ ответлă вырăнсенче ĕçленĕ. Кантур начальникĕ Голованов юлташ кунта ĕлĕк хăйĕнпе пĕрле ĕçленĕ çынсене туртса килнĕ, вĕсенчен Фельдмана снабжени пайĕн начальникĕ, Идоленкона строймастер, Панькина кладовщик, Назаровăна бригадир пулма лартнă. Тÿрĕ кăмăллă, çитменлĕхсене тÿсме пултарайман уйрăм работниксен ĕçрен тухса кайма тивнĕ. Хăйсене хăйсем ытла та тивĕçсĕр тытакан работниксем (главнăй механик Кучук пеккисем) вара кунта пуç пулса тăнă. Çак кантурта паянхи куна та кадрсен пайĕн ĕçне кирлĕ пек йĕркелесе яман-ха.

Кадрсен пайĕсемпе вĕсен руководителĕсем çителĕксĕр ĕçлени хулари ытти предприятисемпе учрежденисенче те пур-ха. Хăшпĕр предприятисемпе организацисенче кадрсен пайне ертсе пыракан работниксем хăйсен ĕçне тĕплĕ пĕлмеççĕ, кадрсен политикăллă тата ĕçлĕ пахалăхне тарăнăн тĕпчесе вĕренес вырăнне ытти тĕрлĕ ĕçсемпе вăхăта ытларах иртереççĕ. Кадрсем мĕнле ĕçлеме пултарасси çинчен хутсем тăрăх, характеристикăсемпе справкăсем тăрăх кăна, бюрократла меслетпе вывод тăваççĕ.

Кадрсем суйласа илес ĕçре ытлашши васкани пире сахал мар чăрмавсем кÿрет. Ытлашши васканă пиркиех ĕнтĕ кадрсем час-часах улшăнаççĕ. Сăмахран, хула Совет исполкомĕнче 1952 çулта икĕ секретарь улшăннă, халĕ виççĕмĕш çын ĕçлет. Коммунальнăй хуçалăх пайĕн заведующийĕсем те икĕ хутчен улшăннă. Халĕ ку ĕçе «вăхăтлăха» Краснова юлташ туса пырать. Калас пулать, Краснова юлташ ĕçе йĕркелесе яма пултарас çукки курăнсах тăрать. Анчах хула Совечĕн руководителĕсем çак ĕçе тивĕçлĕ çын тупса лартма тăрăшни паян кун та курăнмасть. Кадрсем тăтăшах улшăнса тăни ытти хăшпĕр организацисенче те (уйрăмах «Заготзерно» пунктĕнче) хытă сисĕнет.

Хăшпĕр работниксем хăйсен ведомствисен интересĕсемпе вырăнти интересĕсене государство интересĕсенчен çÿлĕрех хураççĕ. Чугун çул станци начальникĕ Тихонов юлташ производство планĕсене ытлашши тултарнă пек кăтартса, суя сведенисем парса тăнă. Тихонов юлташа ултавлă çул çине тăнăшăн ĕçрен хăтарма тиврĕ.

КПСС хула комитечĕ работниксене ĕç çине государство интересĕсем енчен пăхма вĕрентес енĕпе çителĕксĕр ĕçлет, хушнă ĕçе вăхăтра та тĕрĕс пурнăçлас тĕлĕшпе кадрсем умне сахалтарах требовани лартать. Çавăн пирки уйрăм работниксем ответлăха туйса ĕçлемеççĕ.

Хăшпĕр ответлă работниксем хăйсене ертсе пыма шанса панă предприятисем государство предприятийĕсем пулса тăнине манаççĕ, вĕсем çине хăйсен хуçалăхĕ çине пăхнă пек пăхаççĕ, тĕрĕс çултан пăрăнса каяççĕ. «Главсахарăн» Чăваш республикинчи базин управляющийĕ пулнă Краснов 5.589 килограмм сахăр салатса пĕтернĕ, государство укçине хăйĕн кĕсйине чикнĕ. Госбанк уйрăмĕн управляющийĕ Иванов госбанк уйрăмĕн çурчĕсемпе хăйĕн çурчĕсем вырăнне хурса усă курнă. Хăйĕн килĕнче пурăннă вăхăтрах вăл нумай тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхсене госбанк уйрăмĕн çурчĕсенче, çитменнине тата унти работниксене пăхтарса усранă. Кун пек иртĕхсе кайнă чиновникла этемсене, ĕçрен кăларса, тивĕçлипе ответ тыттарнă.

Çак пысăк çитменлĕхсем предприятисемпе учрежденисенче аялтан килекен критикăпа самокритикăна сарса пыманнинчен, тивĕçлĕ министерствăсемпе управленисем хăйсен ведомствисен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăманнинчен, çавăн пекех КПСС хула комитечĕ ертсе пыракан [illegible]

Коммунистсен партийĕ пире яланах сыхăлăхлă пулма, совет государствине тĕреклетессишĕн активлă кĕрешме хушать. Хăшпĕр руководительсем сыхăлăхлă пулма кирли çинчен час-часах калаççĕ, анчах ĕçре хăйсен сисĕмлĕхне кăтартмаççĕ.

Чăвашпотребсоюзăн межрайбазинче склад заведующийĕ пулса ĕçленĕ Ягафаров складран паракан таварсен хакĕсене хăй тĕллĕн ÿстерсе пынă, кунта государствăна пурĕ 100 пин тенкĕлĕх сиен кÿнĕ. Çак сăтăрла ĕçе вăхăтра тăрă шыв çине кăларма йывăрах та пулман ĕнтĕ. Межрайбаза руководителĕн Антонов коммунистăн тата Дьячкова бухгалтерăн сисĕмлĕрех кăна пулмалла пулнă, ĕçе вăхăтра тĕрĕслемелле пулнă. Анчах кунти руководительсем çăвар карса ларнă, çакă вара государствăна питĕ хакла ларчĕ.

Заготзерно пунктĕнче хăшпĕр ответлă вырăнсенче политикăллă шанăçа çухатнă çынсем ларнă. Ĕлĕк судпа айăпланнăскер, халĕ склад заведующийĕ пулса ĕçлекен Дмитриев паян кун та пăтранчăк ĕçсем туса пырать. Унăн 31 тонна тырă тухмасть, склад заведующийĕ пулса ĕçлекенсен Шавгаевăн 1,7 тонна, Козловăн 8,3 тонна, Америкаковăн 3 тонна, Ишковăн 4,9 тонна тырă тухмасть. Вăл çынсем пурте паянхи кун та хăйсен вырăнĕсенчех «ĕçлеççĕ». Заготзерно пункчĕн директорĕ Кулагин юлташ çавăн пек йĕркесĕрлĕхсемпе хăнăхса çитнĕ, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

Кадрсен политикăллă вĕренĕвĕнчи çитменлĕхсене те пĕтермен-ха. Ертсе пыракан уйрăм работниксем хăйсен таçан илнĕ пĕлĕвĕ çине ытларах шанаççĕ, мăнкăмăлланма пăхаççĕ. Вагонсем юсакан завод руководителĕсем Трухин, Колокольнев, Гитин юлташсем, харпăр хăй тĕллĕн вĕренме пулнăскерсем, ĕç планĕ те туман, конспектсем те çырмаççĕ. Трухин юлташ консультацисенче пулмасть. Кун çинчен сăмах тапратсан, Трухин юлташ: «Мана мĕн тума консультант кирлĕ?» — тесе ответлет.

Кадрсен техникăллă пĕлĕвне ÿстерес ĕçре те çитменлĕхсем пур. Вагонсем юсакан заводри мастерсемпе инспекторсем вĕренекен шкулта уйăхĕ-уйăхĕпе занятисем пулмаççĕ. Кунта ертсе пыракан чылай кадрсен техникăллă пĕлĕвĕ çителĕксĕр. Анчах та вĕсем хăйсен пĕлĕвне ÿстерме тăрăшмаççĕ. Техникăллă пĕлĕве ÿстерес тĕлĕшпе уйрăмах инструментальнăй цех начальникĕ Ежов, урапасем тăвакан цех начальникĕ Елисеевпа унăн заместителĕ Тимофеев, Демкин, Шуплыгин, Войнов юлташсем сахал ĕçлеççĕ.

Ĕçе мĕнле пурнăçланине тĕрĕслес тĕлĕшпе те пирĕн пысăк çитменлĕхсем пур. Йышăннă решенисене пурнăçлассишĕн кĕрешни сахал. Сăмахран, строительство кантурĕн ĕçĕ çинчен эпир икĕ хутчен хула комитечĕн бюровĕнче сÿтсе яврăмăр, решенисем йышăнтăмăр. Анчах та унти ĕçсем лайăхланни сисĕнмест-ха.

Нумай организацисенче кадрсен резервĕсене тумаççĕ. Вĕсен руководителĕсем кадрсене ĕçре пиçĕхтерсе ÿстерес вырăнне, çын кирлĕ пулсан, КПСС хула комитетĕнчен ыйтаççĕ. Çапла вара хăйсем çинчен ответлăха сирсе яраççĕ.

Кадрсене суйласа илсе ĕçе вырнаçтарассине тата вĕсене воспитани парассине лайăхлатасси — партин хула комитечĕн чи пысăк тивĕçĕ. Эпир çак ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе пыма, вăл ĕçе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ хушнă пек пурнăçласа пыма тăрăшăпăр.

И. НОВИКОВ,
КПСС Канаш хула комитечĕн секретарĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти чăлха фабрикинче. Сылтăмри — К. Ишмуратова юлташ. Ана хула Советне депутата суйланă.
Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Районти хаçатсенчен

Шкулти лектори

Канашри 2-мĕш вăтам шкулта лектори ĕçлет. Унта учительсем тата лекторсем тĕрлĕ темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем туса параççĕ. Юлашки вăхăтра Ефремов лектор «ССР Союзĕн тĕнчери лару-тăрăвĕ», Емельянов учитель «Тĕнче хăçан пуçланнă тата вăл пĕтме пултарать-и?», географи наукисен кандидачĕ Виткович «Коммунизмăн аслă стройкисем», Ревзина юлташ «Отлично вĕренесси — кашни çамрăкăн тивĕçĕ» темăсем тăрăх лекцисем вуланă.

Кунта час-часах вулакансен конференцийĕсем пулса иртеççĕ.

Çаксем пурте вĕренекенсен пĕлĕвне, [illegible]

«Сталинский путь».

Александр Матросов çинчен

Кÿкеçри вăтам шкулăн библиотеки Александр Матросов паттăр вилĕмпе вилнĕренпе 10 çул тултарнă май вулакансен конференцине ирттернĕ. Унта П. Журба çырнă «Александр Матросов» ятлă кĕнеке тăрăх 19 çын тухса каланă.

«Александр Матросовăн çутă сăнарĕ пире, шкул ачисене, пурне те лайăх вĕренме, Тăван çĕршыва усă кÿрекен, вĕреннĕ çынсем пулма чĕнет», — терĕ конференцире А. Ефремов. Конференци питĕ лайăх иртрĕ.

«Ленин çулĕпе».

Съезд материалĕсене вĕренеççĕ

Элĕк районĕнчи Сурăмпуç Шĕмшешри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене вĕренме семинар организацилерĕç. Унта 7 учитель вĕренет. Пĕтĕмпе 7 заняти ирттернĕ. И. В. Сталин юлташăн съездра тухса каланă историллĕ сăмахне, Г. М. Маленков юлташ тунă отчетлă доклада вĕренсе пĕтернĕ. Халĕ партин XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсене вĕренеççĕ.

Учительсем çавăн пекех И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенине хăйсем тĕллĕн вĕренеççĕ.

«Колхоз хаçачĕ».

Аттестатсем панă

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Светлый путь» колхоз членĕсенчен чылайăшĕ агротехника курсĕнче вĕреннĕ.

Çак кунсенче агротехника курсĕнчен вĕренсе тухнă колхозниксене аттестатсем панă. Колхоз бригадирĕсем З. Кочаков, А. Матросов, К. Кириллов юлташсем, Н. Прокопьев садовод, К. Трофимов, И. Васильев, В. Лаптев, В. Демидов, И. Алексеев колхозниксем аттестат илнĕ.

Колхозниксем, аттестат илсе, тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышне, унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе тата тăрăшарах ĕçлеме сăмах панă.

«Ленин ялавĕ».

Студентсен хорĕ

Шупашкарти театрсемпе рабочисен клубĕсенче Чăваш педагогика институтĕнчи студентсен хорĕ концертсем панине час-часах курма пулать. Çав концертсене ĕçсыннисем яланах юратса итлеççĕ.

Вырăнти Советсен суйлавĕ умĕнхи кунсенче хор Шупашкар хулинчи суйлавçăсем валли пурĕ 7 концерт ирттернĕ. Хор программинче — совет композиторĕсен çĕнĕ произведенийĕсем, чăваш халăх юррисемпе халăх демократи çĕршывĕсенчи халăхсен юррисем. Пĕтĕмпе хор репертуарĕнче 30 юрă ытла шутланать.

Хор уйрăммăнах Блантерăн «Песня о Сталине», Макаровăн «Как у Волги у реки», Заславскин «От Волги до Дона», Хирбюн «Янра юрă», Галкинăн «Шупашкар саламĕ» т. ыт. юрăсене те пысăк ăсталăхпа юрлать. Г. Хрисанов, С. Трагудистис, Тĕрентьева солистсем юрлани курăкансен кăмăлне каять.

Хора çамрăк композитор А. Галкин ертсе пырать.

И. СЕРГЕЕВ.

Артель хуçалăхĕ тĕреклене пырать

Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхозăн обществăллă хуçалăхĕ çултан-çул тĕреклене пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем тата ялхуçалăх ĕçĕнчи механизаторсем партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе тата халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ съездра тухса каланă сăмахпа хавхаланса, 1952 çулта колхоз хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те çĕнĕрен пысăк çитĕнÿсем турĕç.

1950 çулта колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 8,1 центнер тырпул пухса кĕртнĕ пулсан, иртнĕ çулта гектар пуçне 16-шар центнер тĕштырă, планлă заданирен 2-шер центнер ытларах, пухса кĕртнĕ. Хуçалăхра акса тăвакан тĕп культурăсен — тулă, сĕлĕ, йĕтĕн тухăçлăхне нумай ÿстернĕ. 1950 çулта йĕтĕн вăрри гектар пуçне 2,9 центнер тухнă пулсан, 1952 çулта унăн тухăçлăхĕ 8 центнера çити ÿснĕ. Кормилицын юлташ ертсе пыракан бригада вăтам шутпа кашни гектартан 25,6 центнер çурхи тулă пухса кĕртнĕ.

Вăйлă тырпул ÿстерес тата ăна вăхăтра пухса кĕртес ĕçре колхоза МТС механизаторĕсем нумай пулăшнă. Тырпула колхозниксем 20 кун хушшинче вырса пухрĕç, колхоз тырпул хатĕрлесе памалли плана районта чи малтан пурнăçларĕ, обществăллă фондсене тырпул нумай хыврĕ, колхозниксене те пысăк тупăш валеçсе пачĕ.

Артелĕн обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕ те çултан-çул хушăнса пырать. Ытти çулсенче пулнипе танлаштарсан, иртнĕ çулта выльăхсен йышĕ те, тухăçлăхĕ те самаях ÿснĕ. Планпа кашни ĕне пуçне вăтам шутпа 1.500 литр сĕт суса илмелле пулнă пулсан, 1.841-шер литр сĕт суса илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ăста кадрсем ÿснĕ. Каулина тата Леднева дояркăсем фермăра 10—12-шер çул хушши ĕçлеççĕ. 1952 çулта вĕсем хăйсем пăхакан ĕнесенчен вăтам шутпа 2.000 литра [illegible] заданине ирттерсе тултарнă. М. Потапова юлташ хăй пăхакан кашни ама сыснаран çулсеренех 14—16-шар çура илсе пăхса çитĕнтерет. М. Ширманова, А. Паутова колхозницăсем колхозăн чăх-чĕп ферминче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ колхоз производствин ыйтăвĕсене яланах колхозниксен массипе пĕрле татса парать. Хуçалăхри ĕçсене организацилесе ертсе пырас ыйтусене колхоз председателĕ М. Хайлов юлташ правлени ларăвĕнче пăхса тухса çирĕплетет, активпа анлăн хутшăнтарать. Правлени ларăвĕсене уйăхра ик-виç хутран сахал мар, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсене тăтăшах ирттереççĕ. Колхоз правленийĕ тата М. Хайлов юлташ хуçалăхри ĕçсене яланах колхозри парторганизацин халăх хушшинчи ĕçĕпе тачă çыхăнтарса пыраççĕ, йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пынине тăтăш тĕрĕслесе, контроллесе тăраççĕ.

Правлени председателĕ М. Хайлов юлташ хăйĕн ĕç кунне лайăх йĕркелесе пырать. Ир ирех ĕçе тухса, вăл бригадасемпе фермăсенче пулать, нарядсене, хушнă ĕçсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслет, лашасемпе тата автомашинăпа мĕнле ĕç тумаллине кăтартса парать. Кун хыççăн вăл правленине пырать, ĕç документĕсене пăхса тухать, правленине ĕçпе пынă колхозниксене йышăнать. Унтан Хайлов юлташ бригадăсем ĕçленĕ çĕре тухать, ĕç мĕнле пынине тĕрĕслет, кăтартусем парать.

Каçхине председатель колхозра кун каçиччен тунă ĕçсен итогне тăвать, бригадирсен ĕçне пăхса тухать, бригадирсемпе тата ферма заведующийĕсемпе пĕрле ыран тата сывăх кунсенче тумалли ĕçсене палăртать, наряд çырать.

Ĕçе куллен ертсе пыни, кашни бригадăра, фермăра мĕн тунине пĕлсе тăни, бригадирсене ĕçре тăтăшах пулăшу пани, йăнăшсене вăхăтра тÿрлетни, бригадирсене ĕçшĕн ответлă пулма вĕрентни — правлени артель хуçалăхне ертсе пырас ĕçе лайăхлатма, артель пуянлăхне хушса пыма пулăшать.

Колхозри парти организацийĕпе артель правленийĕ колхозниксен политикăллă пĕлĕвĕпе культурăллă шайне тата ĕç квалификацине ÿстерме тăрăшаççĕ. Парти организацийĕ çумĕнче КПСС XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисене вĕренмелли кружок ĕçлет. Колхозра агротехникăпа зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссем ĕçлеççĕ. Вĕсенче 40 çын вĕренеççĕ. Ялти клубпа библиотека — халăх хушшинче культура саракан тĕп вырăнсем. Партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисене халăх хушшине сарас ĕçре парторганизацине 20 агитатор ытла пулăшать.

Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, парти съезчĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пырса, хăйсен колхозĕнче ăратлă выльăхсем ĕрчетме, фермăсенчи йывăр ĕçсене йăлтах механизацилеме, тăрантарас тата пăхас ĕçе лайăхлатнипе выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартма, выльăхсене тухăçлăрах майсемпе пăхса усрама, тĕрĕс пусă çаврăнăшĕ çине хăвăртрах куçса çитнипе акакан пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен çулсеренех 18-шар центнер тĕштырă туса илме йышăннă.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсем [illegible] кан кашни ĕнерен кăçал 2.500-шер литр сĕт суса илме обязательство илнĕ.

Уй-хирте 1953 çулта пысăк тухăçлă тырпул ÿстермелли майсене палăртнă. Минераллă удобренисем 40 тонна илсе хатĕрленĕ, мĕнпур тислĕке уя кăлараççĕ, 150 центнертан кая мар кĕлпе кайăк кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлеççĕ.

Колхоз çуракине тухма вăйлăн хатĕрленет. Уй-хирте юр тытаççĕ, транспорт инвентарьне, ĕç хатĕрĕсемпе машинăсене юсаççĕ, çуракинче агротехникăллă ĕçсен пĕтĕм комплексне пурнăçлама хатĕрленеççĕ.

Иртнĕ çулхи ĕçсен итогне тунă, ăна колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе явса çирĕплетнĕ, колхозăн кăçалхи ĕç планне туса çирĕплетнĕ, бригадăсенче çураки ирттермелли ĕç планĕсем тунă.

Колхозăн 1953 çулхи производство планĕнче пысăк ĕçсем туса ирттерме палăртнă. Выльăх-чĕрлĕх валли çĕнĕ çуртсем лартаççĕ, сад чĕртме, пахча çимĕçсем лартса ÿстерме, уйсенче, çырма хĕррисенче вăрман тăрăхĕсем лартма палăртнă.

Çаксем вĕсем йăлтах колхозăн обществăллă хуçалăхне тĕреклетме, колхозниксен пурнăçне лайăхлатма кирлĕ ĕçсем. Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри ĕçченсем çавна лайăх ăнланаççĕ, ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн чĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ.

И. МАРТЫНОВ.

Пĕчĕк фельетон

Правленири пăру вити

— Çапла вара, мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана ытлашшипех тултартăмăр, тейĕпĕр, — терĕ Кудемерти (Октябрьски районĕ) «Коммунизм» колхоз председателĕ Богатырев юлташ правлени ларăвĕнче.

Вăл те ăш хыпнипе, те калама сăмах тупаймасăр, витререн пĕр курка сивĕ шыв ăсса ĕçрĕ те, малалла калама тытăнчĕ.

— Анчах...

Çав сăмах çинех правлени лару ирттерекен пÿлĕме фермăсен заведующийĕ комсомолка Валентина Александрова хыпăнса чупса кĕчĕ.

— Богатырев юлташ! — хыттăн каларĕ вăл. — Пăрусем шăнса вилеççĕ!

— Мĕнле пăрусем? — тăваттăн харăс ыйтрĕç правлени членĕсем.

— Пĕлтĕрхисем, — терĕ Валя. — Ăшă çĕре кĕртмесен, иртнĕ эрнерс тăватă ĕне вилнĕ пекех, тата тепĕр пилĕк пăру вилме пултарать. Вĕсем, шăнса кÿтнипе, ура çине тăрайми пулнă ĕнтĕ.

— Да... Мăйракаллă шултра выльăхсем хĕл варринче шăнассине шута илме маннă эпир, — терĕ председатель салхуллăн.

Унтан вара, правлени членĕсемпе канашласа, правлени çуртĕнче шăнса ĕнтĕркенĕ пĕлтĕрхи пăрусем валли вите тума йышăнчĕç.

— Хам эпĕ сивĕ пирки правленинче сахал ларатăп, счетовод коридорта та сыркаласа ларĕ, — терĕ Богатырев юлташ.

Çак самантран пуçласа «Коммунизм» колхоз правлени çурчĕ пăру вити пулса тăчĕ.

— Му-у-ук!.. — теççĕ пăрусем правлени çуртне пыракан çынсене.

— Председатель çу-у-ук! — теççĕ ĕнтĕ вĕсем вилесрен хăтăлса юлнипе савăнса.

Анчах ку савăнăç председательшĕн те, пăрусемшĕн те вăхăтлăха çеç пулнă. Мĕншĕн тесен, тепĕр виçĕ кунтан Александрова юлташ Богатырев килне каллех чупса пынă.

— Ĕнесем пăрулама пуçларĕç. Витере çил улать. Ăçта усрăпăр çамрăк пăрусене? Пирĕн вĕсем 40 ытла пулмалла вĕт-ха!.. — тет Валя ним тума аптăраса.

— Тамаша! Мĕншĕн çак сивĕрех пăруламалла пулнă-ха вĕсен? — кăшкăрса пăрахрĕ председатель пăрулакан ĕнесем çине тарăхса.

Анчах ответ тупăнмарĕ. Вара фермăсен заведующийĕ Валентина Александрова малтан пăруланă виçĕ пăрăва хăй килне илсе кайса ăшăтрĕ.

Анчах çапла туни çамрăк выльăхсене те, колхозниксене те тивĕçтерекен ĕç мар-ха. Ыйтас килет, мĕншĕн «Коммунизм» колхоз правленийĕ малашлăха курса ĕçлемест, мĕншĕн Богатырев юлташ хăйне мар, айăпсăр чунсене вырăнсăр айăплать? Кун пек ял куллинчен хăтăлмаллах. Унтан хăтăлма, ытти колхозсенчи пек, витесем вăхăтра лартмалла.

В. МИХАЙЛОВ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн строительствинчи рабочисем «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине ĕçри çитменлĕхсем çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Çырусенчо стройка администрацийĕ механизмсемпе туллин усă курмалла туманнине, строительсен ĕçне тивĕçлипе организацилеменнине, комбинат ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартса панăччĕ.

КПСС Шупашкар хула комитечĕ, çырусенче асăннисене тĕрĕслесе тухса, çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса пани çинчен пĕлтерчĕ. Çырусенче кăтартнă çитменлĕхсене пĕтересси çинчен строительствăри партбюро ларăвĕнче сÿтсе явнă, бюро çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăннă.

Производствăри халиччен пĕлмен резервсене шырамалла, тупмалла, вĕсемпе усă курмалла

(Партин XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕпне панă директивсенчен).

★ ★ ★ ★ ★ ★ ★

Пĕр тикĕс, график тăрăх ĕçлессишĕн

Еçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод 1952 çулхи пĕрремĕш çур çулта ситĕлекĕçĕр ĕçлерĕ. Вăл январь, февраль тата май уйăхĕсенче плана тултарайнăрах, Тăван çĕршыв умĕнче пысăк парăма кĕчĕ.

— Пысăкланă плана тултарма производство хăвачĕ ситмест, шалти резервсем урăх çук, оборудовани ĕç вăйĕ хушса парсан çеç ăнăçлă ĕçлеме пулать,— тесе калаçма тытăнăччĕ хăйнĕн руководительсем. Парторганизаци çак сигнăл шухăш-кăмăла юрĕç хастарлă кĕрешĕр, завод юлса пынине пĕтерме пĕтĕм коллектива мобилизацилерĕ.

Пирĕн парторганизаци йывăрлăхсемпе чăмрамасене пĕтермелле хăнăхса ситрĕ. Цехсенчи парторганизацисем техникăпа экономика ыйтăнăсемпе тĕплĕрех интересленме тытăнчĕç. Коммунистсем шалти резервсене палăртма, наукăпа техникăн сĕнĕ ситĕнĕвĕсемпе тата новаторсен опычĕпе усă курма цех руководителĕсене ытларах пулăшма тытăнчĕç.

Иртнĕ çул пуçламăшĕнче сборочнăй цехсем пĕрремĕш изоляционнăй цех детальсем ситĕлекĕ туса кăларăпан пирки йĕркелеç ĕçлеймесчĕç. Çак цех мĕншĕн юлса пынине тĕрĕлеме тата шалти резервсене палăртма ятарлаха комисси тăрăмăр. Комиссине пуçарулă станхановецсем, инженерсемпе техниксем пулчĕç. Вĕсем станоксемпе тĕрĕс мар усă курнине палăртрĕç. Рабочисенчен нумайăшĕ ĕç нормине 180—200 процент тултарса пынă. Сиелтен çапах, кунта ĕçе лайăх йĕркеленĕ теме пулать. Чăнине апла пулман. Цех станоксен хăвачĕпе 60—80 процент çеç усă курнă. Хăшĕпĕр рабочисем оборудование тухăçлă усă курайман.

Комисси сĕнĕ тăрăх, цех технологи процессне сĕнĕлле йĕркеленĕ. Порошока малтан ăшăтни, нумай шăтăклă прессформăсем туса хатĕрленни тата ытти организацилăк-техникăлăк мерăсем цех юлса пыннине пĕтерме пулăшрĕç. Пех иртнĕ çулта детальсем туса кăларăпанине 28 процент ӳстерчĕ.

Завод малтанхи вăхăтра ситĕлекĕçĕр ĕçлени чылай цехсем плана пĕр тикĕс тултарса пыманнинчен нумай кулнĕ. 1952 çулта уйăхри плана пĕрремĕш сборочнăй цех çичĕ хут, иккĕмĕш сборочнăй цех—виçĕ хут, тăваттăмĕш сборочнăй цех—тăватă хут тултарайнăç. Завод пĕр тикĕс ĕçлеменнине çăкăнтан уçăлăн курма пулать: 1952 çулта вăтам шутпа уйăхăн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнче 11,1 процент, иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче—26,9 процент, виççĕмĕш вунăкунлăхĕнче—56 процент продукци туса кăларнă. Ĕçе çавăн пек йĕркелесен, чаллах, рабочисем уйăхăн малтанхи кунĕсенче ăхăлă нумай тăрăççĕ. Шутласа пăхнă тăрăх, завод рабочисем çулталăкра 100 пин рабочи-сехете ăхăн хаклă вăхăта сая ярă. Плана тултарас тесе, цех руководителĕсем уйăх вĕçленес умĕн штурмлама тытăнăççĕ, рабочисене сверхурочно ĕçлеттересçĕ, сверхурочно ĕçлеттерсе ĕç уçки нумай пĕтеркçĕ.

Виççĕмĕш кварталта коллектив пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕ, государство умĕнчи парăма татăма хăйĕн вăйне шеллемесĕр кĕрешрĕ. Ăнчăх сборочнăй цехсене кренежлăй пек юлса пыни чăрмантарма тытăнчĕ. Винтсем сиктеминне конвейерсем смен-сменине ăхăлă тăвăтчĕç. Партком-сăк цех ĕçĕне тĕплĕн интереслентĕ. Стахановецсем, инженерсемпе техникăсем технологи процеснĕ çĕнетсе лайăхлатма, оборудование тухăçлă ĕçлеттерме пулăшаван майсене палăртрĕç. Цехра автоматстаноксем пур. Ресурсем пысăк пахалăхлă пуçман пирки çак станоксем лайăх усă курмаллине шырама пуçларĕç. Цехри парторганизаци асăннă ситменлĕхсене пĕтерме тытăнă. IV-мĕш квартала крепежлăй цех хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕç, заводăн производство планне чылай иртнĕрсе тултарма кирлĕ чухлĕ детальсем тăтăрĕç.

Иртнĕ çул пуçламăшĕнче штăмповочнăй цех та задание пурнăçласа пырайнăçлĕ, шутти цехсене чăмрантартăç. Цех начальникĕ пулса ĕçлеме Кудряшов, юлташа çартсан тата цехри партбюро составне уйăлтасран ĕçсем аванлама пуçларĕç.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ячĕпе сарăлнă социализмăн ăмăрту заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен политикăлă активлăхĕнче ĕçри хастарлăхне вăйлатрĕ. Завод виççĕмĕш кварталти производство планне иртнĕрсе тултарчĕ, СССР Электропромышленность министерствине пăхăнса тăракан предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмăн ăмăртăнĕнче иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ячĕпе ăшшăнăп историлĕ решенисемпе тата И. В. Сталин юлташăн произведенийĕнче хавхаланса, завод коллективĕ IV-мĕш квартала тата пысăкрах ĕçтĕртӳ турĕ, СССР Министрĕсен Совечĕн кусса çурекен Хĕрлĕ Ялавне тата иртнĕремĕш преми илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Иккĕмĕш çур çулта завод хăйĕн пĕрремĕш çур çулĕнчи парăмне татрĕ, продукци туса кăларăмалли çулталăкри плана 107,4 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 102 процент ытла тултарчĕ.

1953 çулта завод коллективĕ умĕнче ответлă задачăсем тăрăççĕ: пĕлтĕрхинчен чылай ытларах продукци туса кăлармалла, коммунизмăн аслă стройкисене кăтăкăрах аппаратсем тăратмалла, техникăпа экономика кăтартăвĕсене лайăхлатмалла. Парторганизаци хăйĕн ĕçне çулталăкри плана ăнăçлăн тултарас тĕллеве пăхăнтарса туса пырать. Çак çулăн пуçламăшĕнче завод коллективĕ выраннă Советсене суйламалли куна ĕри çĕнĕ ситĕнӳсемпе кĕтсе илме сăмах панă. Цехсем, сменăсем, бригадăсем хушшинче социализмăн ăмăрту сарăлса кайрĕ. Завод январь уйăхĕнче продукци туса кăларăмалли плана 107,6 процент тултарчĕ.

Пирĕн коллектив тунă ситĕнӳсемпе лăпланса ларманнине, Кашни цехран усă курман резервсем сахал мар. График тăрăх ĕçлесси çав-савах пурнăçланса пыраймасть-ха. Чылай станоксене тухăçлă ĕçлеттермеççĕ. Хăшĕпĕр руководительсемпе коммунистсем ĕçри ситменлĕксене кимĕнсе тăрăççĕ, кивĕ йăласене хирĕç кĕрешмеççĕ, малалла аталанма пулăшакан пуçарусене сарма тăрăшмаççĕ. Парторганизаци коммунистсемпе пиртен тăман рабочисен пуçарăвĕпе пултарулăхне тăтăшах ӳстерме, ăнăçлă килекен критикăна вăйлатма, социализмăпа ăмăртăна тата сӳлерех пусăма хăцартма тăрăшатăп.

Н. ШУВАЛОВ,
Еçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри партком секретарĕ.

Перекетлĕхшĕн кĕрешетпĕр

Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕпне панă директивсене пурнăçласси хамăр хастарлă та тӳрĕ камăлна ăçленинчен килет. Съезд решенийĕсене чысăлăн пурнăçлас тесе пирĕн дело коллективĕ ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Рабочисем хушшинче социализмăн ăмăрту сарăлса пырать. Хисеп хăми сиче производствăри стахановецсен ячĕсем çĕнĕрен тĕ çĕнĕрен хушăнаççĕ.

Манăн эпир мĕнле ĕçлени синчен калаçаса парас килет.

Подшипниксене касса якатма пирĕн депора ĕлĕкрех нумай вăхăт кирлĕ пулнă. Ĕç ăнвăр та каткăчĕ. Малтан çав детальсене ăшăтаттăмăр, пĕрлешнĕ вырăна çиелтен тăхлан виттеттĕмĕр. Ку ĕçе пăхăрăçсем тăваттăç. «Подшипниксем хытă вĕрилесе каятчĕç. Çавăнпа та вĕсене малалла касса якатма пуçличчен темиçе сехет хушши кĕтме тиветчĕ.

Çак кăтăк ĕçе çăмăллатас тесе нумай вăй хутăм, кирлĕ меслет шырарăм. Халĕ подшипниксем пĕрлешнĕ вырăна якатасине станок синче тăвататпăр, электричество вăйĕне тата бронăна шăратса çыпăçтаратпăр. Ун хыççăн çавăнтах палла тăвататпăр, мĕншĕн тесен электричество вăйĕне шăратса çыпăçтарнă чухне металл ăшăмманпа пĕрех.

Çакăн пек меслетпе ĕçлени вăхăта 4—5 сехет таран перекетлеме, чылай рабочисене урăх ĕçе куçарма май парать.

Ĕçре кашни минутпах усă курма тăрăшатăр. Нумай чухне пирĕн сменăна юсама инкĕ пăравус парассĕ. Ăнчах хăшпĕр чухне пĕр локомотив пани те пулаканть. Палла ĕнтĕ, ун пек чухне ĕç сахалтарах пулать. Пушă вăхăтра çĕнĕ запассем кĕтсе лармастăп, тĕрлĕ детальсем хатĕрлетпĕр. Юсама пăравус пани тĕлĕ пирĕн мĕнпур детальсем хатĕр пулаççĕ. Çав детальсене тепĕр хут тĕрĕлесе, локомотив сине хăварт вырнаçтарса лартатпăр.

Коллективра материалсем перекетлесишĕн те вăйлă кĕрешу пырать. Хăшпĕр подшипниксем вытлах, тепписем—сахалтарах сийĕнеççĕ. Вĕсем вырăнне çĕнĕ детальсем кирлĕ. Подшипник йӳнĕ мар: 175 тенке яхăн тăрать.

Çавăн пек меслетпе усă курма тытăнтăмăр: туса хатĕрленĕ пĕчĕкрех подшипниксе ĕлĕкхи пек кăларса ывăтмастпăр, ăна токарь станокĕ синче пысăклататпăр. Ку вăл каштни сменăран пулать. Çакăнтан ĕнтĕ материалсем тата укçа-тенкĕ нумай перекетленине курма пулать.

Кун пек тĕслĕхсем вунпăр илсе кăтартма пулать. Вăл тĕслĕхсем вăхăта тата материалсене перекетленĕ çĕрте усă курман çалкуçем вĕçĕ-хĕрринĕр пулнине кăтартса парассĕ. Эпĕ çапла шутлатăп: пирĕн депора усă курман, ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăпкаван шалти резервсем питĕ нумай.

Пирĕн депори тата ытти предприятисенчи кашни рядовой рабочи производствăра творчествăлла ĕçлесен, çĕнĕ ĕç меслечĕсем шырасан, производство пахалăхне культурине ӳстерĕпĕр, юратнă Тăван çĕршыва вуншар пин тенкĕ перекетлесе парăпăр. Çак укçа-тенкĕ халăх хуçалăхĕн çĕнĕ отраслĕсене тунă çĕре кайĕ, пирĕн тăван Коммунистсен партийĕ, аслă Сталин палăртнă питĕ пысăк задачăсене пурнăçлама пулăшăпĕ.

В. КУЗИН,
Улатăрти пăравус депойĕнчи слесарь-стахановец.



Еçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри бригадăсем хушшинче паха продукци туса кăларакан бригада ятне илме тивĕçлĕ пулассинчен социализмăн ăмăрту сарăлнă. Çак ăмăртура уйăрăмах Л. Шеронова юлташ ертсе пыракан бригада паха тĕслĕх кăтартать. Бригада членĕсене «Отличник соревнования электропромышленности СССР» ятлă значоксем панă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Л. Шеронова юлташ (сулахайри) А. Пудова фрезеровщица туса кăларнă детальсене тĕрĕслет.

Г. ЗИНЬКОВ фотоукерчĕкĕ.

Технологи процесне тĕрĕс йĕркелемелле

Иртнĕ çулта Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ, 1951 çулхине таныштарсан, 18,7 процент ытларах продукци туса кăларчĕ, ĕç тухăçлăхне 11,3 процент ӳстерчĕ. Стахановецсем, рационализаторсем оборудование лайăхрах усă курма, чĕртаварпа материалсем тата электроэнерги перекетлеме çĕнĕрен те çĕнĕ меслесем пыраççĕ, паха сĕнӳсем парассĕ. Чылай изделиесене конвейер тăрăх туса кăларма тытăнни; цехсене çенĕ йышши станоксемпе хĕспăнлантарни, коллективăн пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ ӳссе пыни производство культурине хăнăртма пулăшрĕç.

1952 çул пуçламăшĕнче цех поток меслечĕ тăрăх ĕçлеме пуçларĕ. Рационализаторсем, конструкторсеменпе технологсем пукан туса кăларма конвейер хатĕрлерĕç. Конвейĕр тупи хатĕрлени ĕçе механизацилеме, продукци пахалăхне лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăппĕ. Çавăнпа пĕрлех рабочисен ĕç условийĕ лайăхланчĕ.

Новаторсем ĕççыннисем валли çĕнĕ йышши, илемлĕрех те пахарах сĕтел-пукан туса кăларас тĕллеве те нумай тăрăшаççĕ. В. Пастухов, С. Кашкаров, А. Шубалов столярсем тата аслă мастер И. Дмитриев юлташ çĕнĕ йышши пукан конструкцине туса хатĕрлерĕç. Çĕнĕ пукан халĕ туса кăларакан пукапран илемлĕрех, тĕрекленĕрех, ăна туса кăларма сăмăлрах. Çак пукан валли детальсене туса кăларма ансатрах, ситменине тата йывăрран 15—20 процент ытларах ĕçе юрăхлă пайсем кăларма пулать.

Иртнĕ çул пирĕн коллективăн ĕмĕр асран кайми çул пулчĕ. Правительство пире Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе тăракан университет валли сĕтел-пукан тума чыслă та ответлă задани панă. Университет валли пирĕн пек ĕçе 30 яхăн тĕрлĕ издели туса кăларчĕ. Комбинатра ĕлĕкрех ун пек продукци туса кăларман. Çавăнпа коллективăн технологи процесне йĕркелес тĕллеве хăйĕн творчествине ӳстермелле пулчĕ. Правительство панă заказа чылай пурнăçласишĕн рабочисем, инженерсемпе техникăсем ырми-канми тăрăнпĕç. Цехри партинпе профсоюз организацийĕсем, инженерсемпе техниксем социализмăн ăмăртăна сарса тăрăшаççĕ, çĕнĕ ĕç мелĕсене, рационализаторла сĕнӳсене тупи кăмăла кĕтсе иççĕç. Рационализаторсемпе изобретательсем цех руководителĕсене пысăк пулăшу парассĕ, ĕçре тĕл пулакан ситменлĕксемпе йывăрлăхсене пĕтермелли мелсем тупаççĕ.

1952 çулта комбинатра пурĕ 77 рационализаторла сĕнӳ пурнăçа кĕртнĕ. Çав сĕнӳсем çулталăкра 950 пин тенкĕлĕх материал тата укçа-тенкĕ перекетлеме май парассĕç.

Пукансем пухма гребенчатăй бобышкăсем нумай кирлĕ. Ĕлĕкрех бобышкăсене ăлăпа вырнаçтарса лартнă. Норма тăрăх сменăра 1.600 бобышка вырнаçтарса лартмалла пулнă. Рационализаторсем çак операцине фрезерлăй станокпа тума сĕнӳ пачĕç. Çав сĕнĕре пурнăçа кĕртни ĕç тухăçлăхне 2,5 хут ӳстерчĕ. Халĕ рационализаторсем копировально-фрезерлăй станок тухăçлăхне ӳстерме, детальсен пахалăхне лайăхлатма май паракан тăтăрсем тăвас тĕллеве тимлĕн ĕлкĕрççĕ. Çавăн пек паха тĕслĕхсем тата пур.

Анчах пирĕн комбинатра чылай цехсемпе участоксенче кивелнĕ техникăпа усă курассĕ, йывăр ĕçсене механизацилеме тăрăпмассĕ. Уйăрăмах çавăн пек ситменлĕхсем йывăç склăдĕнче, сушильнăй цехра тата пĕрремĕш цехра нумай. Вăрçă хыççăнхи çулсенче тĕп цехсен хăвачĕ виçĕ хута яхăн ӳсрĕ. Сушилка хуçалăхăвара ĕлĕкхи пекех юлнă. Малта пыракан предприятисенче сушилкăсене çĕнетнĕ, камерăсенче сывалăн кăмăрăпсар сăвăнса сĕрмемеле тунă. Çапла тунă сушилкăсем тухăçлăхне 30—40 процент ӳстерет. Пирĕн комбинатра та кун пек тума пулнă. Хуçалăх руководителĕсем сăвăнăçсăр пулнине сес çĕнĕ мелсетне усă курмассĕ.

Комбинат чылайранпа юман фанера туса кăларать. Фанерăна янăх сушилкăра сĕлĕкçен синче типĕтессĕ. Сăвăнна типĕ чухне фанера сурканлантă тата типĕр мар пулать. Çак ситменлĕхе тахçанах пĕтерме пулнă, мĕншĕн тесен комбинатра фанера типĕтме роликлĕ сушилка пур, анчах ăна вырнаçтарса ĕçе ямассĕ.

Цехсем пĕр пек ĕçлемессĕ: хăшпĕрисем плана тăтăшах тултарса пыраççĕ, теприсем—заданине аран-аран пурнăçлаççĕ. Плана уйăхран уйăха тултарса пырайман цехсем те пур. Комбинатри чылăх ситменлĕх вăл—пĕр типĕс ĕçлеменни. Çавна пула уйăхăн малтанхи кунĕсенче нумай станоксем ăхалă тараççĕ, уйăх вĕçĕнче вара оборудование юсамасăр ĕçлеттереççĕ.

1952 çулта тата кăçалхи январь уйăхĕнче комбинат плана тултарайнăрăп. Февраль уйăхĕнче ĕçсем пушшех янăх пыраççĕ. Чĕртаварпа материалсем вăхăтра тата ситĕлекĕç кӳрсе килменине пула чылай рабочисем тухăçлă ĕçлеймеççĕ.

В. ДАВИДЕНКО,
IV-мĕш цех начальникĕ.

Н. ШЕРЕМЕТЬЕВ,
цехри технорук.

Артель членĕсен ситĕнĕвĕ

ВАРНАР. «Труговик» артель коллективĕ иртнĕ çул планран иртнĕрсе 135 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларăмалли продукци хăйне хаклаканах хакне 4 процент йӳнетнĕ.

Артель коллективĕ кăçалхи производство планне те срокчен тултарма тăрăшать. Выраннă Советсен суйлав кунĕ тĕлне çĕнĕ çĕлекен, вĕрен яваканпа цехсем февраль уйăх планне тултарнă. Çав цехсенче ĕçлекен И. Батраковпа С. Евдокимов кулленхи нормăна 180-шар процент тултарса пырассĕç. Чăпта çапаканпа, атăпушмак çĕлекен, йывăç материалсем хăтĕрлекен цехсем те лайăх ĕçлеççĕ.

Артельти тир-сăран тăвакан цех—сĕнĕ цех. Вăл иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче кăна ĕçлеме тытăннă. Çак цех январь уйăх планне чылай иртнĕрсе тултарчĕ. А. Ионкин мастер кулленхи нормăна 200 процент тултарса пырать.

Артель кӳлеткĕвĕн пухăвĕ мартăн 8-мĕшĕ тĕлне кварталти плана тултарма пуçлчĕ.

С. ФЕДОТОВ.

Производство планне кашни предприяти тăтăшах тултарса пытăр

1952 çулта социализмăлă экономика пысăк çитĕнӳсем турĕ. Пирĕн çĕршыв промышленность продукци туса кăлармалли плана иртнĕрсе тултарчĕ. 1951 çулхине таныштарсан, металл, çĕр кăмăрăкĕ, нефть, машинăсем т.-ыт. те нумайрах туса кăларнă. Коммунизмăн аслă стройкисенче ĕç ăнăçлăн сарăлса пырать. Ĕçсыннисен пурнăçна йăла тата культура условийĕсем лайăхланаççĕ.

Иртнĕ çулта пирĕн республикăри промышленность, 1951 çулхине таныштарсан, продукци çичĕ процент нумайрах туса кăларнă, ĕç тухăçлăхĕ кашни рабочи пуçне вăтам шутпа 10,6 процент ӳснĕ. Пурăнмалли çуртсем, халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăларас, торф хăтĕрлес тĕллеве пысăкрах ӳсĕмсем тунă.

Еçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод, 1951 çулхине таныштарсан, 23,7 процент ытларах продукци туса кăларнă, плана çирĕплетнĕ изделиесем тăрăх тултарнă. Султалăк хушшинче ĕç тухăçлăхĕ 16,4 процент ӳснĕ. План тăрăх продукцин хăйне хаклаканах хакне 13,8 процент йӳнетмелле пулнă, чăнине 14,8 процент чакарнă. Сылва вара завод планран иртнĕрсе чылай тупăн тунă.

Шупашкарти пин-авăр комбиначĕ планран иртнĕрсе чылай сăн арласа кăларнă, ĕç тухăçлăхне 18 процент ӳстерчĕ, продукци пахалăхне лайăхлатнă, чĕртавар чылай перекетленĕ. Ку предприяти султалăкĕнех пĕр тикĕс ĕçленĕ. Комбинат коллективĕ уйăрăмах сĕнĕ рабочисем вĕрентесе хатĕрлесе, стахановецсен опытне сарас тĕллеве пысăк ĕçсене туса иртнĕрех.

Сĕмĕрлери экстраат тăвакан «Большевик» завод тăтăшах пĕр тикĕс ĕçлет. Вăл производство планне кварталăн кварталне, уйăхран уйăха тултарса пырать. СССР Сăмăл промышленность министерстванче пăхăнса тăракан предприятисем хушшинчи социализмăлă ăмăртура çак завод пĕр хут çеç мар малти вырăна тухнă.

Атăл леш енчи торф предприятийĕ, Шупашкартри пин-авăр тата лента тĕртекен фабрикăсем те государство заданине чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Анчах республикăра юлса пыраканнисем, производство планне уйăхран уйăха тултарса пырайман предприятисем те сахал мар-ха. Чылай фабрикăсемпе заводсенче плана сирĕплетнĕ ассортимент тăрăх тултарма, экономикăпа техника кăтартăвĕсене лайăхлатма, малта пыракансен опычĕпе мелĕпе пĕтĕстерсе сарма тăрăшмаççĕ. Промышленность енĕпе ĕçлекен министерствăсемпе управлениесем, трестсем плана кашни предприяти тăрăх тата уйăхран уйăха тултарса пымалла тума тăрăшмаççĕ.

«Чăвашпăрман» трест çулталăкри плана пĕтĕмпе 99 процент тултарнă. 14 предприятиен плана тăхăрăшнă тултарман. Юлса пыракан вăрманпромхозсем 7 миллион тенкĕлĕх продукци парса ситереймен. Малта пыраканнисем вара планран иртнĕрсе 6 миллион тенкĕлĕх ăнăçлă хатĕрленĕ тата тĕрлĕ продукци туса кăларнă. Çапла вара янăх ĕçлекен предприятисем малта пыраканнисем шучĕне пуçласçĕ. Çавăн сĕвĕрлĕ ситменлĕхсем вырăнти промышленность промысла кооперацийĕнче тĕ сахал мар.

Хăшпĕр хуçалăх руководителĕсем государствăна хирĕçле ĕç тăвас çул сине тăрассĕ: чи кирлĕ ăпланса тума кăларнăлан плана тултарса пыма тăрăшмассĕç, халăх хуçалăхне питех те кирлĕ мар изделиесем вара заланкрен нумайăрах туса кăларма пăхассĕç. Продукци пахалăхне, лайăхлатас тĕллеве государство дисциплинине пăсиç тĕслĕхсем те сахал мар.

Шупашкартри Волошлинов ячĕпе тăракан тир-сăран комбиначĕ ĕççыннисем ирвагонсем юсакан, Куславккари çуртсем тăвакан заводсенче производство культурине ӳстересшĕн кирлĕ пек кĕрешменнине палăртас пулать. Чылай предприятисене уйăхăн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнче 10—15 процент, иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче — 20—25 процент, виççĕмĕш вунăкунлăхĕнче — 50 — 65 процент продукци туса кăларассĕç.

Канашри вагонсем юсакан завод продукци туса кăлармалли çулталăкри плана пĕтĕмпе 103,9 процент тултарнă. Сиелтен пăхсан завод янăх мар ĕçленĕ теме пулать. Чăннине вăл сителĕксĕр ĕçленĕ, Тăван çĕршыва çĕршер вагон парса ситереймен. Унăн ĕçĕнчи тепĕр ситменлăх—продукцин хăйне лараканах хакне 5,6 процент хаклалатни. Завод усăсăр тăкакпсем 790 пин тенкĕлĕх тунă, брак нумай тунине пула 352 пин тенкĕ убыток панă.

Заводра уйăрăмах материалсене перекетлессишĕн, учетпа отчет ĕçне лайăхлатассишĕн янăх кĕрешнине палăртас пулать. Хуçалăх руководителĕсем, партбюро, завком экономика кăтартăвĕсене сахал интереслеççĕ, шалти резервсемпе усă курма тăрăпмассĕç. Юсама ĕçре килнĕ вагонсене салатнă чухне кивĕ детальсене шута илмеççĕ. Цехсемпе бригадăсем хушшинчи социализмăлă ăмăртăнăн итогĕсене пăхса тухнă чухне продукцин хăйне лараканах хакне йӳнетмелли заданине мĕнпе пурнăçланине шута илмеççĕ. «Вагонник» хăзартра тата стена хăçачĕсенче перекетлăк ситменлĕх синчен сахал сутатассĕç. Ĕçе сăвăн пек йĕркеленине пула завод иртнĕ çул нормăран иртнĕрсе 4.472 кубометр хăма, 7 тонна винăра, 2.047 кустăмра банджакĕ ăнăçлăнă. Укçан шутласан, сметăна пăхниччен 2 миллион тенкĕ нумайрах пĕтернĕ.

Сĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ продукци туса кăларнăлан 1952 çулхи плана пĕтĕмпе те тултарайнăрăп. Кунта ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕкрех. Комбинат нормăран иртнĕрсе 11 пин кубометр ытла йывăç тата сĕршер пин тенкĕлĕх тĕрлĕ материалсем расходланă. Продукцин хăйне лараканах хакне йӳнетмелли заданине пурнăçламан. Хуçасăрăхăва пĕтерес, производствăна лайăхрах йĕркелес вырăнне комбинатăн ĕлĕкхи директорĕ сул отчетсем парас çул çине тăнă. Кунсăр пуçне вăл партине государство дисциплинине час-часах пăснă.

Кулавккари çуртсем тăвакан завод плана çирĕплетнĕ номенклатура енĕпе тултарман. Кунта та перекетлĕхшĕн, тирпейлĕхшĕн сителĕксĕр кĕрешеççĕ. Завод нормăран иртнĕрсе 3 миллион тенкĕлĕх ытла материал расходланă.

Республикăра строительство ĕçĕсем çутан-çуй ӳссе пыраççĕ. Предприятисене, шкулсемпе больницăсене, пурăнмали çуртсене вăхăтра туса лартасси материалсем, уйрăмах чулпа кирпĕч сителĕклĕ пулнинчен нумай килет. Строительство материалĕсем промышленность управленийĕн (начальникĕ М. Репкин юлташ), Вăрăмти промышленность министерствин (министрĕ Н. Бобров юлташ), Чăвашпромсоветăн (председателĕ Я. Маклашкин юлташ) кирпĕч тумалли сезона лайăх хатĕрленес тĕллеве татăлă мерăсем йышăнас пулать. Пилĕкмĕш пилĕкçулхăра Шупашкар тимпростанцине тума тытăмăпала. Халăх хуçалăхне строительство материалĕсем ĕлĕкхинчен темиçе хут нумайрах кирлĕ пулать.

Кунта эпир хăшпĕр предприятисен перевисценне ситменлĕхĕсем синчен ĕçе чăрăнса тăрăмăр. Çавăн пек ĕçе ĕçлесен ытти предприятисенче те чылай. Асăннă тĕслĕхсем пирĕн промышленноçра усă курман резервсем нумайăшĕне кăтартаççĕ. Çав резервсене палăртасси, вĕсемпе усă курасси—предприятисенчи партине профсоюз тата хуçалăх организацийĕсен тивĕçĕ.

Хăшпĕр фабрикăсемпе заводсен руководителĕсем Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ кăтартса панисеннен тивĕçлĕ вывод туман. Штурмовщинăна, пĕр тикĕс мар ĕçленине пĕтермени çавăн синчен калать те ĕнтĕ. Канашри вагонсем юсакан завод, Сĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ, «Чăвашпăрман» трест тата ытти чылай предприятисене трестсем кăçалхи январь уйăхĕнче янăх ĕçлерĕç. Ку уйăха та улшăнусем пулмарĕç.

Малта пыракан предприятисен опычĕ сăкна ӳçăн кăтартса парать: кашни фабрика, завод, электростанци хĕлĕн-сăвĕн тухăçлă ĕçлеме пултарать. Иртнĕ çулхара Улатăрти пăравуссем юсакан завод, Сĕмĕрлери «Большевик» завод, Шупашкартри пин-авăр фабрики плана ăнăçлă тултарнă.

«Государство планĕсене тултарса пыманнин тĕп сăлтăвĕсеннен-пĕри вăл предприятисем уйăх тăршшĕнче продукци пĕр тикĕс кăларса тăманни пулать. Партин çулсăлăх руководителĕсене çак ситменлĕхе пĕр хут çеç мар кăтартса пана. Анчах халĕ те чылай предприятисем пĕр тикĕс ĕçлемеççĕ-хĕç. Уйăхра туса кăларманни продукцие çуррине янăх вĕсем виççĕмĕш вунăкунлăхра туса кăларассĕç. Çакă вăл производство хăвачĕсемпе тулини усă курманни пачне, рабочисене ĕç хăçăкăн хăнăрласа ĕçлеттереççи пачне, брак ӳсеччи пачне тата хăйсемпе сыхăнса тăракан ытти предприятисен ĕçне чарса вăтантаран илсе пырать»,—терĕ партин XIX-мĕш съезĕнче Г. М. Маленков юлташ.

Съезд решенийĕсене ĕçри ситменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле хушассĕç. Сакăнтан промышленность енĕпе ĕçлекен министерствăсемпе управленисем, предприяти руководителĕсем тивĕçлĕ вывод тумалла. 1953 çулта кашни предприяти плана пур тăкăртусем тăрăх та уйăхран уйăха тултарса тата иртнĕрсе тултарса пытăр.

П. ПЛАТОНОВ,
Чăваш АССР Статистика управленийĕн начальникĕн заместителĕ.

Америка интервенчĕсем тыткăнра илнĕ салтаксемпе тупă ашĕ выранне усă курассĕ

ПЕКИН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви корреспонденчĕ Кэсонран февралĕн 21-мĕшĕнче çапла пĕлтерет:

— Иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче американецсем «ирĕке кăларас» сăлтавпа 11.000 тыткăна лекнĕ салтаксемпе офицерсене Ли Сын Ман бандичĕсен аллине тытса панă. Вĕсемпе Ли Сын Ман çарĕнче тупă ашĕ выранне усă курассĕ. Çакăн çинчен Ли Сын Ман çарне тытса янă, нумаях пулмасть Корейăпа Китай чаçĕсем тытăнра илнĕ çар çыннисем каласа парассĕ. Вĕсем çапла калаççĕ: тыткăна лекнĕ 11.000 çар çыннине американецсем Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусене юри чарса лартнă тапхăрта Ли Сын Ман бандичĕсен аллине панă.

Тыткăна лекнĕ çакă 11.000 çар çыннисемĕр пуçне американецсем 1952 çулхи июль уйăхĕнче Ли Сын Ман бандичĕсен аллине тыткăна лекнĕ 27.000 çар çыннисене тытса пани вăл—тыткăна лекнĕ çар çыннисенчен сахалтан та 38.000 çынтан американецсем валли тупă ашĕ туса хуни пулать.

Тыткăна лекнĕ çар çыннисене вăйпа тытса чарма американецсем хатĕрленĕ лагерьсенчен пĕринче Ли Хак Су тата Ким Хюн Сик каласа панисем çирĕплетеççĕ. Вĕсем Корея Халăх çарне 1950 çулхи август уйăхĕнче кĕнĕ, çак çулхинех октябрь уйăхĕнче тыткăна лекнĕ. Вĕсем иккĕшĕ те Кочжедо утравĕ çинчи Америка лагерĕнче пулнă: пĕри—84-мĕш, секторта, теприи—71-мĕш секторта.

Ли Хак Су каланă тăрăх, тыткăна лекнĕ çар çыннисене 84-мĕш сектора 1952 çулхи февраль уйăхĕнче вăйпа «суйласа илнĕ». Америкăпа Ли Сын Ман агенчĕсем тыткăна лекнĕ çар çыннисене «пĕчченшерĕн допрос» тума пуçланă. Тыткăна лекнĕ çар çыннисем татăклăнах хăйсем киле таврăнма пулни çинчен пĕлтерсен, вăрттăн агентсем вĕсен ячĕсене Англи чĕлхипе «гоу» сăмах çырса хунă. Çакă вăл тыткăна лекнĕ çыннисене агентсем хĕнемелле тенине пĕлтерет. Вĕсем допрос тăвакан пӳлĕмрен тухсанах, Ли Сын Ман агенчĕсем çак çар çыннисене çине тапăнса хĕнеме пуçланă. Нумайăшне электричество токĕпе асаплантарнă. Çакăн пек асаплантарса тата хĕнесе вилнĕ çар çыннисене сывлăмпа вĕсенчен нумайăшĕ вара пĕтернĕ çыннисене пĕтерет. Вăл çыннисене хăваласа кайнă тата сывлăхне пĕтерес çар çынни ирĕке кăлармасăр пурăнать.

Тыткăна лекнĕ çар çыннисене май уйăхĕнче Корейăри Масань лагерьне, Ли Сын Ман бандичĕсен аллине пама, куçарнă. Американецсем тыткăна лекнĕ çар çыннисене пĕчĕкшер секторсене вырнаçтарса тухнă. Çапла тунипе вĕсем тыткăна лекнĕ салтаксемпе офицерсене хăратасшăн пулнă.

Америкăпа Ли Сын Ман бандичĕсем çак лагерьте Женевăра йышăннă конвенцие хирĕç пыракан йĕркесем туса хунă. Лагерьсене юрлама, ушкăнпа виçĕ çынтан ытла пуçтарăнса калаçма чарнă. Америкăпа Ли Сын Ман бандичĕсем тыткăнри çар çыннисене хĕненĕ, хăшне чухне вара, правилăсене пăснă теекен сăлтавпа, персе пăрахнă.

Ли Сын Ман бандичĕсем секторсенче пĕр хут çеç мар кĕтмен çĕртен ухтарусем тунă, тыткăна лекнĕ çар çыннисене арестленĕ, асаплантарнă. Хăйсен тăван çĕршыв сутма килĕшмен çар çыннисене çавăнтах персе пăрахнă. Ван Флит корреспондентсене Корея суруттарĕ çинчи лагерьсене, вăл шутра Масань лагерьне те пырса çӳреме чарнă. Вăл американецсемпе лисынмановецсен тăвакан терроре çинчен хăçатсем çинчен ниĕпле хыпар та кăлармалла мар тăвасшăн пулнă.

Иртнĕ çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа Масань лагерĕнчен тыткăна лекнĕ 11.000 çар çыннине çичĕ ушкăнпа «ирĕке кăларнă». Ли Хак Су тата Ким Хюн Сик уяттăмĕш ушкăнра пулса октябрĕн 25-мĕшĕнче «ирĕке тухнă». Ли Хак Су каланă тăрăх, тыткăна лекнисене «ирĕке кăларас» умĕн Америкăпа Ли Сын Манăн вăрттăн агенчĕсем вĕсене «коммунизма хирĕç кĕрешекен» реакциллĕ ассоциаци ретне кĕме тата Ли Сын Ман çарне кĕретĕр тесе тупа тума хĕтĕрнĕ. Вĕсене хуралпа Йондынхона кăларса янă вăхăтра Америка генерал-майорĕ вĕсемпе калаçнă чухне Ли Сын Ман çарне кĕмесен вĕсене тĕрмене хупса лартассипе хăратнă. Çакăн хыççăн вĕсене Сеулти полици управленине илсе пынă. Кунта вĕсене регистрацие тăма тата регистрацире пулни çинчен ятарласа хатĕрленĕ карточкăсем илме хĕтĕрнĕ. Çакăн хыççăн вĕсене полици медицина комиссине тăма хушнă. Вăрттăн агентсем вĕсене пĕр хут çеç мар Ли Сын Ман çарне кĕме ирĕксĕрленĕ. Вĕсене çапла каланă: американецсем иртнĕ çулхи июль уйăхĕнче «ирĕке кăларас» ятпа Ли Сын Ман бандичĕсен аллине панă 27 пин çар çыннисенчен пурте Ли Сын Ман çарне кĕнĕ, тенĕ. Хăйне пур-пĕрех тытса лартасса парассине тата унтан хăтăлма урăх нимелле те май та çуккине кура, Ли Хак Су Америка çарĕ çумĕнче туса хунă ĕç вăйĕ тара тытакан кантур тенĕскерĕнче регистрацие тăнă. Çак майпа вăл çар службинчен тата хăйне фронта ярассинчен хăтăлса юлма шутланă.

Анчах çак организаци вăл ячĕшĕн кăна рабочисем пухакан организаци шутланать. Тĕрĕссипе вăл Америка çарĕ валли тупă ашĕ хатĕрлес тĕллĕпе юри ĕçлесе тăракан агентство пулнă. Çак кантур Ли Хак Суна «N1D» специальлĕ служба агентствине янă. Вăл агентство Ли Сын Ман çарĕн командованийĕ çумĕнче ĕçлесе тăрать. Унта кĕске вăхăт хушши пулнă хыççăн, ăна Ли Сын Ман çарне янă.

Ли Хак Су пекех Ким Хюн Сика та ĕç вăйĕ тара тытакан теекен кантур шпион ĕçне вĕренме Америкăн тинĕс пехотин 1-мĕш дивизийĕ çумĕнче ĕçлесе тăракан специальлăй службăн «TLO» текен агентствине янă. Ким Хюн Сик призыва тăмалли çула çитнĕ çамрăк шутланнă пирки, ăна ĕççĕр çӳрет тесе арестлесе хăратма пăхнă. Тĕрĕссипе илсен, полици хушнипе, тыткăна лекнĕ çар çыннисене ниĕпле те те илмен. Вара Ким Хюн Сикăн ирĕксĕрех ĕç вăйĕ пухас тĕллĕпе ĕçлекен текен кантура пымалла пулнă. Ли Хак Су тата Ким Хюн Сик çапла каланă: вĕсем çак кантурта пулнă чухне Америкăпа Ли Сын Ман агенчĕсем вĕсене хăйсем тыткăнри çар çыннисен пулни çинчен никама та пĕлтермелле мар, тесе хытă асăрхаттарнă.

Çак фактсем вĕсем тата тепĕр хут çакна çирĕплетсе параççĕ: «ирĕклĕн репатриацилемелле» теекен принципа йышăнтарма сĕнсе тата перемири çинчен пыракан калаçусене чарса лартма хăтланса, американецсем тыткăна лекнĕ çар çыннисене Ли Сын Ман бандичĕсен аллине тупă ашĕ выранне пама тĕллев тытаççĕ.

ИНДИРЕ ТУБЕРКУЛЕЗ ЧИРĔПЕ ВИЛЕКЕНСЕМ НУМАЙ

КАРАЧИ, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс оф Пакистан агентстви корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, Инди сывлăх министрĕ Раджкумари Амрит Каур çапла каланă: Индире туберкулез чирĕпе кашни минутрах пĕр çын вилет.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнай командованийĕ паян çапла пĕлтерет: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарне хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

Вьетнам халăх çарĕн çитĕнĕвĕсем

ПЕКИН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Вьетнам информаци агентстви çапла пĕлтерет: Вьетнам халăх çарĕн чаçĕсемпе тăшман тылĕнче кĕрешекен халăх партизанĕсем Куанг-Наме тата Да-Нанге çывăхĕнчи пиллĕкмĕш зонăра, çапла пекех Ан-Харе пысăк çитĕнӳсем тунă. Пиллĕкмĕш зонăра Вьетнам халăх çарĕн чаçĕсем çарт лапткăн районĕнче тата Кхань-Хоа районĕн кăнтăр пайĕнче çапăçса, тăшмана чылай çухатусем кӳнĕ.

Жиал-Лай, Контум тата Дак-Лак провинцийĕсенче партизансем хăйсем йышăнса тăракан района чылай аслăлатнă.

Вьетнам халăх çарĕн чаçĕсем кăçалхи январь уйăхĕнче Ан-Хе районĕнче тăшмана хытăн пырса çапнă. Тăшман Куи-Ньонере десант антарма хăтланнине сирсе янă.

Вьетнам халăх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле çапăçакан вак халăхсем те тăшмана хирĕç кĕрешĕве вăйлатаççĕ.

Партизансем вăрçă ытларах та ытларах вăйланма пуçланă.

БИРМĂРА ЧАН КАЙ-ШИ БАНДИСЕМ ИРТĔХНИ

ШАНХАЙ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рангунран пĕлтернĕ тăрăх, Чан Кай-ши бандисем çапла Бирма хулисем çине тапăнаççĕ, çынсене çаратаççĕ, пусмăрлаççĕ, вĕлереççĕ. Бирма хаçачĕ «Нейшн» февралĕн 16-мĕшĕнче гоминдановецсем чикĕри, Лашио-Кунмин çулĕ çинчи Кью-Кок хулине туртса илни çинчен пĕлтерет. Вĕсем хуларан Бирма гарнизонне хăваласа кăларнă та хăйсен ялавне çĕкленĕ. Чан Кай-ши бандисем çавăн пекех тата Таунги хулинчен 130 миля кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри Монг-Пан хулине туртса илнĕ.

Бирма çарĕн уттăмĕш пехота бригадин командирĕ арми-полковникĕ Чит Миа Инг пĕлтернĕ тăрăх, Бирма çарĕн подразделенийĕсем февралĕн 21-мĕшĕнче гоминдановецсене Кью-Кок хулинчен, февралĕн 22-мĕшĕнче Монг-Пан хулинчен хăваласа кăларнă. Анчах та Чан Кай-ши бандисем тата тепĕр хут çак хуласем çине тапăннă, анчах вĕсен ĕçĕ ку хутра ăнăçсăр пулнă. Вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ пирки, тесе пĕлтернĕ полковник Чит Миа Инг, Кью-Кок хулине пĕтĕмпех ишĕлтернĕ.

Полковник Чит Миа Инг гоминдановецсем Америкăн ку чухнехи хĕçпăшалĕпе хĕçпăшаллани çинчен, гоминдановецсен Бирмăри командующийĕ генерал Ли Ми хальхи вăхăтра Таиландра пулни çинчен те пĕлтернĕ. Командующи унтан чанкайшистсем валли Бирмăна Америка хĕçпăшалне ярса тăрать.

Бирма хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Бирма общественноçĕ правительствăран чанкайшистсене Бирмăран хăваласа кăларас тĕллĕпе татăклă мерăсем йышăнма ыйтать.

Венăра Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн исполнительнăй комитечĕн сессийĕ уçăлнă

ВЕНА, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Венăра Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн исполнительнăй комитечĕн сессийĕ уçăлнă.

Сесси кун йĕркинче çак ыйтусем тăрăççĕ:

1. Лайăх ĕç укçипе, ĕçсĕрлĕх хирĕç, профсоюз прависемшĕн кĕрешме ĕççыннисене пĕрлештерес тĕллĕпе профсоюзсен ĕçĕнчи задачисене мсслечĕсем; 2. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн виççĕмĕш конгресне пухасси; 3. Халăхсен мире хӳтĕлес тĕллĕпе пулнă конгресĕн решенийĕсем тата вĕсене пурнăçлас ĕçре ĕçсем йышăнакан вырăн; 4. Ялхуçалăхĕнчи ĕççыннисен хăйсен пурнăçне лайăхлатассишĕн пыракан кĕрешĕве вăйлатасси, вĕсен экономикăллă тата социальнăй требованийĕсене профсоюзсем хӳтĕлесси; 5. 1952 çулхи бюджета пурнăçлани çинчен тата 1953 çулхи бюджета çирĕплетесси.

Кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйту тăрăх Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Луи Сайян доклад туса панă.

Хĕвеланăç Германири полици иртĕхнине хирĕç

БЕРЛИН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи компарти правленийĕн председателĕ Макс Рейман Баварири шалти ĕçсен министрĕ Хегнерăн ирсĕр ĕçĕсене хирĕç протест панă. Хегнĕр приказĕ тăрăх февралĕн 21-мĕшĕнче Мюнхенра митинга хăваласа салатнă. Макс Рейман çапла кăтартса панă: социал-демократ Хегнер Мюнхенри митинга Бонри шалти ĕçсен министрĕ Лер тата американецсем хушнипе хăваласа салатнă.

Хегнер, тенĕ Макс Рейман, Хĕвеланăç Германие малалла фашизацилес ĕçе вăйлатма пулăшать. Полици иртĕхни вăл компартипе унăн бундестагри депутачĕсене кăна мар тата мире сыхлаха хăварассишĕн, пĕрлĕхлĕ Германи туса хурассишĕн кĕрешекен мĕнпур çынсене хирĕç пырать. Социал-демократсен партийĕн членĕсемпе профсоюз членĕсем, çавăн пекех тата Хĕвеланăç Германири мĕнпур ĕççыннисен çакна лайăх пĕлес пулать: социал-демократсен партийĕн сылтăм лидерĕсем çĕршыва фашизацилес тата вăрçа хатĕрлес тĕллĕпе Аденауэрпа унăн Америкăри хуçисене активлă пулăшма пуçларĕç.

Лару-тăру йывăрланса çитрĕ, тенĕ Макс Рейман. Çавăнпа та социал-демократсен партийĕпе профсоюзсен членĕсен коммунистсемпе пĕрле ĕçлес пулать, фашистла террора хирĕç пыракан кĕрешӳре рабочи класăн пĕрлĕхне туса хурас пулать. Çак фашистла террора текех тӳссе тăма çук. Макс Рейман мĕнпур нимĕç патриочĕсене полици репрессийĕсене хирĕç тăма, демократиллĕ правăсемпе ирĕклĕхсене хӳтĕлеме чĕннĕ.

Юлашкинчен Рейман çапла каланă: Бонпа Парижра алă пуснă çар договорĕсене ратификацилеме юрамасть. Бонн режимне пĕтерсе хурас пулать, Германие пĕрлештермелли правительство туса хумалла.

Хьюлетт Джонсон Торонто хулинче тухса калани

ОТТАВА, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 24-мĕшĕнче Мессей Холл залĕнче массăллă митинг пулнă. Унта Канадăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществи чĕннипе Канадăна пырса çитнĕ Кентербери соборĕн настоятелĕ Хьюлетт Джонсон сăмах тухса каланă.

Митинга халăх нумай пулнă. Митинга кĕрес текенсем нумайăшĕ вырăн пулман пирки зала кĕме пултарайман.

Хьюлетт Джонсон Торонто хулинчи халăха Совет Союзĕнче пурăнакан халăхсем хушшинче мĕнле майпа пĕртанлăх туса хуни çинчен, мĕншĕн Совет Союзĕ пирки элек сарни çинчен, Совет Союзĕпе туслă пурăнни Канадăна пулăшма пултарни çинчен каласа панă.

Реакци Джонсона тухса калама чарасшăн пулнă. Çав шутпа митинга юри çынсем янă. Вĕсем кăшкăрашса оратора сăмах калама чарма хăтланнă, анчах вĕсене залран кăларса янă.

ПОЛИЦИ ТЕРРОРĔ

БУЭНОС-АЙРЕС, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Перура ĕççыннисемпе рабочи юхăмĕн деятелĕсене хĕсĕрлесси вăйланни çинчен пĕлтереççĕ. Юлашки вăхăтра Арекипри типографисене ĕçлекенсен профсоюзĕн руководителне Рауль Акостана, Перури коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ пулнă Хорхе Акостана, миршĕн кĕрешекен паллă çынна Хулиан Сесар Левонона тата ыттисене те арестленĕ.

Хальхи вăхăтра Перу тĕрмисенче политикăллă ĕçсемшĕн айăпланă икĕ пин çын ытла ларать. Одриа генералăн фашистла çар диктатурин полицийĕ ĕçĕсем тата вăл Перу çĕршывне Америка империалисчĕсен интересĕсене пăхăнтарас тĕллĕпе тытса пыракан политика ĕççыннисене хирĕç кăна мар, Америка монополийĕсемпе çыхăнман буржуази те хирĕç пыраççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Пренса Континенталь агентстви корреспонденчĕ Гаванăран пĕлтернĕ тăрăх, Куба полицийĕ Батист правительствин политикине хирĕçле шухăшсем ӳсе пынине чарса лартас шутпа пĕтĕм çĕршывра террора ĕçсем тăвать. Корреспондент çырнă тăрăх, юлашки вăхăтра «Куба хĕрарăмĕсен демократиллĕ федерацийĕн», çĕвĕ промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн тата социалистла халăх партийĕн Гаванăри, Санта-Клари тата ытти хуласенчи вырăнти организацийĕсен çурчĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Корреспондент çапла çырать: прогрессивлă организацисене хирĕç тăвакан мĕнпур террористла ĕçсене «Америка посольстви алли курăнса тăрать».

Австрире грипп чирĕ саралнă

ВЕНА, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Австрири пичет агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Штирире (Хĕвеланăç Австри) грипп чирĕпе чирлекенсен йышĕ ӳсни палăрать. Ку таранӑччен грипп чирĕпе 22 çын вилнине регистрациленĕ.

Бразилири выçлăх

МОНТЕВИДЕО, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Çанталăк типĕ тăнă пирки Бразилин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче виççĕмĕш çул хушши пыракан выçлăх тата правительство выçă лараканене пулăшманни Бразили халăхне хытă тарăхтарать.

Латинла Америка çĕршывĕсенче тухса тăракан хаçатсем çĕршывăн чылай штачĕсенче халăх пăлхани çинчен пĕлтереççĕ. Кĕрешӳ вăйланса пырать. Выçă лараканăн хресченсен пысăк ушкăнĕсем, хĕçпăшала та хăратăпăшалсăр та, пĕмещиксен имениĕсем çине, магазинсемпе апат-çимĕç склачĕсем çине тапăнаççĕ, апат-çимĕçе туртса илсе хăйсем хушшинче валеçеççĕ. «Коррейо да Манья» хаçат Ресфран (Пернамбуко штачĕ) пĕлтернĕ тăрăх, «Пĕтĕм çурçĕр хĕвелтухăçĕнче вĕçсем йывăрланса çитнĕ». Февралĕн 18-мĕшĕнче выçă лараканран пиншер хресченсем Оурикури хулине пырса кĕрсе апат-çимĕç пама ыйтнă, ирĕкпе памасан вăйпа туртса илессипе хăратнă.

Выçă лараканесем Помбал хулине (Параиб штачĕ) пырса кĕрсе вырăнти властьсенчен çăкăр та ĕç пама ыйтнă.

Уругвайра тухса тăракан «Эль Паис» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Итапипокра (Сеара штачĕ) тата Сао-Жосе-до-Эжиптора (Пернамбуко штачĕ) выçă лараканесем магазинсем çине тапăннă, апат-çимĕç туртса илнĕ.

АВСТРИРИ ПАРЛАМЕНТ СУЙЛАВĔН ИТОГĔСЕМ

ВЕНА, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Австрире парламент суйлавĕ пулса иртнĕ. Суйлав «Австри халăх оппозицийĕ» ятпа блока пĕрлешнĕ прогрессивлă вăйсене хирĕç террора ĕçсем тума ларутăрура иртнĕ.

Паян ирхине Венăри радио пĕлтернĕ тăрăх, парламентри вырăнсем çакăн пек пайланса тăраççĕ: «Австри халăх партийĕ»—74 вырăн, «социалистсен партийĕ»—73 вырăн, фашистла союз—14 вырăн, «Австри халăх оппозицийĕ»—4 вырăн.

Çĕр чĕтренĕ пирки Совет Союзĕ Ирана панă пулăшу

ТЕГЕРАН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Иранра çĕр чĕтренĕ май Совет Союзĕн Иранри посолĕ И. В. Садчиков Иран ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Фатеми господин патĕнче пулса, хăй пăшăрханни çинчен пĕлтернĕ. И. В. Садчиков Совет Союзĕнчи Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çурмăйăх Обществисен Союзĕн ячĕпе Фатеми господина Иранри Хĕрлĕ Арасланпа Хĕвел Обществи валли çĕр чĕтренинчен сиен курнă Иран халăхне пулăшма 500.000 риал укçа панă.

Пулăшу панăшăн Фатеми Совет Союзĕн посолне Иран правительстви ячĕпе Совет Правительствине тав тума каланă.

Англипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществи пĕлтерни

ЛОНДОН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Англипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществи февралĕн 25-мĕшĕнче заявлени пичетлесе кăларнă. Унта Англири хĕрарăмсен ассамблейин сессине чĕнĕ фашизма хирĕç кĕрешекен совет хĕрарăмĕсен комитечĕн представителĕсене Англи правительстви Англие пыма ирĕк паман пирки пăшăрханса çинчен каланă.

Совет шахматисчĕсен чаплă çĕнтерĕвĕ

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ШАХМАТ ТУРНИРĔНЧЕ СОВЕТ МАСТЕРĔ ТОЛУШ ÇĔНТЕРНĔ

БУХАРЕСТ, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Паян пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕн юлашки, 19-мĕш вăйă пулнă. Малтан 15-мĕш хут çуреĕ хыççăн Спасскипе Толуш хушшинчи парти никам çĕнтерейменнипе вĕçленет. Кун хыççăн Петросянпа О'Келли (Бельги), Смысловпа Л. Сабо (Венгри) вăйă никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ, тесе килĕшеççĕ.

Çапла вара турнирта çĕнтерекенсем Толуш, Петросян, Смыслов пулса тăраççĕ. Рэдулескупа Болеславский хушшинчи партие совет гроссмейстерĕ пĕр пешка выляса илет. Парти вĕçленмесĕр юлать.

Пĕр уйăх хушши кĕрешнĕ хыççăн, совет шахматисчĕсем çĕнĕрен чаплă çĕнтерӳ тăваççĕ, вĕсем улта вырăнтан малтанхи пиллĕк вырăна йышăнаççĕ.

БУХАРЕСТ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 26-мĕшĕнче Рэдулескупа Болеславский хушшинчи юлнă партие выляса пĕтернĕ.

Болеславский пĕр пешка ытларах пулнă. Анчах шахмат хăми çинче фигурăсем сахал пулнă пирки çапăçăва усă курма йывăр пулнă. Парти пĕтĕмпе 14 сехет хушши пынă, 142-мĕш хут çӳренĕ хыççăн никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Çапла çĕнтĕ турнирта малтанхи вырăнсене çаксем йышăннă: пĕрремĕш вырăн: Толуш (СССР)—14 очко, иккĕмĕш вырăн: Петросян (СССР)—13 очко, виççĕмĕш вырăн: Смыслов (СССР)—12,5 очко.

Тăваттăмĕш, пиллĕкмĕш тата улттăмĕш вырăнсене Болеславский (СССР), Л. Сабо (Венгри), Спасский (СССР) йышăннă. Вĕсем 12-шер очко илнĕ.

БУХАРЕСТ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕ вĕçленнĕ. Турнир вĕçленнĕ ятпа академик Михаил Садовяну саламлă сăмах каланă. Турнирта çĕнтерекенсене призсем панă. Çавăн пекех турнирти лайăх партисемшĕн призсем панă. Лайăх партишĕн паракан пĕрремĕш приза Спасский (СССР) илнĕ. Ана Бардана (Норвеги) хирĕç вылянă партишĕн панă. Лайăх партишĕн иккĕмĕшпе виççĕмĕш призсене Смысловпа Рейхера панă.

Турнира хупăннисен ячĕпе ответлă сăмах турнирта мала тухнă Александр Толуш каланă.

Юлашкинчен Румыни артисчĕсен концерчĕ пулнă.

БОКС

Бокс—çамрăксен юратнă спорчĕ. Вăл сынна чăтăмлă, вăйлă пулма пулăшать. Юлашки çулсенче çак спорт республикăри çамрăксем хушшинче чылай сарăлчĕ.

Çак кунсенче бокс енĕпе Шупашкарта мала тухассишĕн ăмăрту пулчĕ. Унта 35 çамрăк боксер хутшăнчĕ. Çавăн пекех бокс енĕпе хулари 22-мĕш тата 2-мĕш вăтам шкулсен хушшинче ăмăрту иртрĕ. Ăмăртура 6:1 шутпа 22-мĕш вăтам шкул команди çĕнтерчĕ.

Ăмăртура мала тухнă çамрăк боксерсене парнесем тата хулари физкультурăпа спорт комитечĕн дипломĕсене панă.

Ыйтусемпе ответсем

ЫЙТУ. Çĕр чĕтренни мĕнле майпа тата ăçта пулать?
(М. Емельянов,—Октябрьски районĕнчи Чечей касси ялĕ).

ОТВЕТ. Çĕр чĕтресси виçĕ майпа пулать. Хăш чухне çĕр айĕнче пушă вырăнсем пулаççĕ. Çĕр айĕнче юхса çӳрекен шыв хăшпĕр япаласене (тăвара, гипса, известняка тата ыттине) хуллен ирĕлтерсе ытти çĕрелле илсе каять. Çавăнпа та вăхăт иртнĕ çемĕн çĕр айĕнче чылай пысăк пушă вырăнсем пулаççĕ, вара çиелти сий аялалла анса ларать. Çиелти сий ишĕлнĕ чухне таврари çĕр чĕтренине сисме пулать. Кун йышши сăлтавпа çĕр чĕтрени вăйлă пулмасть, унăн инкекĕ те пысăк мар.

Тепĕр чухне çĕр вулкансем лава пĕрĕхтерсе кăларнă чухне çĕр чĕтрет. Вулкансем лава кăларнă чухне е ун умĕнхи вăхăтра вулкан таврашĕнчи вырăнсенче çĕр чĕтренни вăйлă палăрать. Кун пек сăлтавпа çĕр чĕтренĕ чухне çывăхри тинĕсенчи шыв питĕ вăйлă хумханать. Вулкан сăлтавĕпе çĕр чĕтрени темĕн чухлĕ инкек туса пултарать. Вулкансем тип çĕр çинче те, тинĕс варринче те пулаççĕ.

Тата тектоникăла çĕр чĕтрени пулать. Ку майпа çĕр чĕтренĕ чухне питĕ нумай улшăнусем пулса иртме пултараççĕ. Тектоникăла çĕр чĕтрени питĕ вăйлă пулать, вăл тĕрлĕ çĕр сăрчĕсем таврашĕнче пуçланса йĕри-таврала сарăлать. Совет Союзĕн кăнтăр чикки тăрăх çĕр сăрчĕсем пур. Çав сăртсем тĕлĕнче çĕр айĕнче гипоцентр текен вырăнсем пур. Гипоцентр тесе чĕтреме пуçлакан вырăнсене калаççĕ. Гипоцентрсем çĕр айĕнчен чылай тарăнра пулаççĕ: хăш чухне 10 километр тарăнăшĕнче, хăш чухне 40 километр тарăнăшĕнче. Чи тарăнри гипоцентрсем çĕр айĕнчен 300 километра çитиччен тарăнăшĕнче пулма пултараççĕ. Çĕр чĕтресси тарăн гипоцентрсенчен пуçланса каять пулсан, вăл çĕр çинчи хуласене, сăртсене ытла питех çĕмĕрсе тăкмасть. Гипоцентр 10 километр тарăнăшĕнче çеç пулсан, вара çĕр вăйлă чĕтрет. Çавăн чухне çывăхри хуласенче чул çуртсем ишĕлеççĕ, юханшывсем, хăйсен çулĕсенчен пăрăнса, ытти çулпа юхма пуçлаççĕ, ялсене тата хуласене пырса лексе темĕн чухлĕ инкек тума пултараççĕ.

Хăшпĕр сăртсен патĕнче çĕр чĕтренине ку таранччен те сăнаман, кун йышши сăртсем: Урал сăрчĕ, Скандинави çурутравĕ çинчи сăртсем. Сăртсенчен инçетри аялăмлă вырăнсенче те çĕр вăйлă чĕтренине сăнаман. Тĕслĕхрен, 1940 çулта Карпат сăрчĕсенче çĕр вăйлă чĕтрени чухне вăл Мускавра, Киевра, Львовра та сисĕнĕ, çак хуласенче те çĕр чĕтренĕ. Анчах çак айлăмра пурăнакан хуласенче пурăнакансенчен çĕр чĕтренине нумайăшĕ сисмесĕрех юлнă, вăл питĕ вăйсăр пулнă.

Çĕр чĕтренине тĕпчесе вĕренекен наукăна пур, ăна сейсмологи теççĕ. Çĕр чĕтренине сăнамалли сейсмограф текен хатĕр çĕр кашни тĕрленнине те палăртма май парать. Мускаври сейсмограф тĕнчере çĕр чĕтренине ăçта пулсан та кăтартса парать. Тĕслĕхрен, Японин утравĕсенче çĕр чĕтренĕ пулсан, Мускаври сейсмограф çакна çинчен те пĕлтерет. Сейсмограф кăтартнă тăрăх, эпир çĕр час-часах чĕтренине пĕлме пултаратпăр. Çĕр чĕтремен кун пĕре те çук мĕн, ăçта та пулсан çĕр чĕтретех.

Çĕр чĕтрени мĕншĕн пулнине ăнланас пулсан, пирĕн çĕр варринчи веществосем мĕнле пулни çинчен аса илес пулать. Çĕр ăшĕнче питĕ вĕри, çав вĕри вырăнта пур веществосем те шĕвек пулма пултараççĕ, мĕншĕн тесен çителĕклĕ вĕри пур вĕсем япаласем те шăранса шĕвекленеççĕ. Анчах ученăйсем çĕр ăшĕнчи вещество шĕвек мар пулмалла тесе шутлаççĕ, унти веществосене çиелти сийри веществосем питĕ вăйлă пусса тăраççĕ. Çавăнпа çĕр чăмăрĕ ăшĕнчи вещество шĕвек мар, анчах çемçе. Çак çемçе веществоăра пĕрмай улшăну пулса пырать, йывăртараххисем аялалла кусăнса пыраççĕ. Çавăн чухне те çĕр чăмăрĕ ăшĕнчи вещество хуллен вырăнтан вырăна кусать. Çĕр варринчи веществосен кусăнне çиелти сийсем те туйса тăмасăр юлмаççĕ. Çиелти сийсем пурнăçлан хăвăрт кусни чухне те пулсан çĕр чĕтрет.

Çĕр сийĕ пĕрмаях улшăнса пырать. Голланди çĕршывĕ тинĕс хĕрринче пулнă. Ученăйсем шутласа пăхнă тăрăх, Голланди çĕрĕ кашни çулах икшер миллиметр аялалла анса ларать, çапла вăл 500 çул иртсен аялалла пĕр метр анать, Голланди çĕрне кашни çулах тинĕс шывĕ кĕрсе пырать. Кунти халăх тинĕсрен хӳтĕленес тесе тинĕс хĕрринче чулран хăмбăсем туса лартнă. Скандинави çурутравĕ кашни çул та сăртлăнтарт сулĕлсе хăпарса пырать. Çапла хăш тинĕсĕрсем хуллен сулĕлле хăпараççĕ, хăшпĕр вырăнти тинĕсĕр аялалла анса пырать те тинĕсе миллион çул иртсен тахçан авал тинĕс пулнă вырăнта тинĕсĕр пулса тăрать, тахçан авал тинĕсĕр пулнă вырăнта халĕ тинĕс сарăлса выртать.

Пирĕн Чăваш республики çĕршывĕ те тахçан авал тинĕс тĕпĕнче выртнă. Пирĕн çĕрте вырăнсенче тăпма хăйăр кунта çĕлĕк-авал тинĕс тĕпĕ пулнине пĕлтереççĕ. Тăмпа хăйăр тинĕс тĕпĕнче çеç пулма пултараççĕ. Тахçан авал тинĕс шывĕнче çес пурăнма пултарнă чĕрчунсен шăмшаккисене хамăр çĕршывăн тăмпа хăйăр ăшĕнче темĕн чухлĕ тупаççĕ. Çав тинĕсре пурăннă чĕрчунсен шăмшаккисен пирĕн çĕршыв тахçан авал тинĕс тĕпĕнче пулнине тата ĕнентерӳллĕрех палăртаççĕ. Çĕр çийĕ чăнах та, чылай хăвăрт та улшăнса пыма пултарать. Вăл хăвăрт улшăннă чухне çĕр чĕтрет.

Хальхи вăхăтра хамăр патăрта çĕр чĕтренине эпир сисейместпĕр, питĕ вăйсăр пулнă пирки ăна сейсмограф текен хатĕрсем çеç сисме пултараççĕ. Пирĕнпе чи çывăххи вырткан Урал сăрчĕсем тахçан авал пулнă, вĕсен Кавказ сăрчĕсенчен ватăрах, çавăнпа унта çĕр чĕтрени пулмасть. Карпат сăрчĕсем Урал сăрчĕсенчен çамрăкрах, Карпат сăрчĕсенче час-часах çĕр чĕтрет. Анчах унта çĕр чĕтренĕ чухне пулăнса кайнă хумсем пирĕн патра çитеймессĕ. Кавказра, Крымра çĕр чĕтрени хумĕ те пирĕн пата питĕ вăйсăрланса çитет, эпир ăна сисмесĕрех юлатпăр. Çавăнпа пирĕн патра çĕр чĕтрени пулмасть, тетпĕр.

Ф. КУЗЬМИН.

ПĔЛТЕРНИ

Февралĕн 28-мĕшĕнче, 20 сехетре, партин хула комитечĕн библиотека çуртĕнче агитаторсемпе докладчиксем валли инструктивлă доклад пулать. Тема: «Мартăн 8-мĕшĕ—пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ». Докладчик—М. Я. Буркова юлташ.

КПСС ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Паян, февралĕн 28-мĕшĕнче, чăвашла çĕнĕ спектакль
«ВИÇĔ ТУЙ»
Спектакль 20 сехетре пуçланать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленноçть пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çыру пайĕ—2-82, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01304. Типографи №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.